Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 18 ТУНТИКУН 89 (4902)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Чебоксары Ц. Б. ... О

Ака вăхăтĕнче политикăлă-массăлă ĕçе анлăн сарса пырар

Пирĕн республикăра çуракине тухрĕ, республикăн кăнтăрĕнчи районĕсем акаççĕ. Колхозлă хресченсем кăçалхи çуракине хамăрпа кӳршĕллĕ Тутар тата Мордва республикĕсемпе социалисăмла ăмăртура хутшăнса гектартан вăтамăн 100-шер пăт тĕштырă туса илме обязательство илсе тухрĕç. Çав ăмăртăва пуçараканĕсем пирĕн республикăри колхозниксем хăйсем пулса тăраççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ хамăр республикăри парти организацийĕсем умне уйрăмах ответлă задачăсем тухса тăраççĕ. Парти организацисем çуракинче вăрлăхсен, суха, сӳре ĕçĕсен, инвентарсен пахалăхĕсемшĕн т. ыт. те тимлесе тăрăшма кирлĕ. Çавăн пекех тата бригадăсенче политикăлă-массăлă ĕçе сӳлĕ пусăма лартассишĕн, МТС рабочийĕсемпе колхозниксем хушшинче социалисăмла ăмăрту ĕçне лайăх организацилессишĕн кĕрешсе пымала. Парти организацисен партилĕ-массăлă ĕçсене хуçалăх ĕçĕсемпе тĕрĕс çыхăнтарса пырас пулать. Ку тĕлĕшпе Сталин юлташ политикăпа хуçалăха пĕр-пĕринчен уйăрма çукки çинчен каланине манма юрамасть. „Пĕр енчен тепĕр енне кайса çапăнма юрамасть,—тет Сталин юлташ.— Политикăна хуçалăхран уйăрма юрамасть. Епĕр политикăран пăрăнма пултараймăн пекех, хуçалăхран та пăрăнма пултараймастпăр“.

Партин хăшпĕр организацийĕсем Сталин юлташ çавăн пек асăрхаттарса каланине хисепе илмен. Сăмахран, Канаш, Йелчĕк, Патăрьел т. ыт. районсенче трактăриссене иртнĕ çулхи ĕçсемшĕн тӳлесе татмасăр çуракине тухаççĕ. Çав районсемех колхозниксене иртнĕ çул ĕçленĕ ĕçкунĕсем тăрăх тупăша валеçсе пĕтермен. Тăрă шыв çине кăлармасăр юлнă халăх тăшманĕсем йалхуçалăхĕн сталинла уставне кĕревсĕр пăсаççĕ, колхозниксене тивекен тупăша вĕсем хăйсем тĕллĕнех урăх çĕре йараççĕ. Кунашкал ĕç, сăмахран, Шăхасан районĕнчи „Свет“ колхозра пулнă. Çавăн пек кĕревсĕр ĕçсене туса, халăх тăшманĕсем колхозниксене кӳрентерме, колхозлă хресченсене сивĕн кӳме ăмсанаççĕ. Ака мĕншĕн ĕнтĕ парти организацисен политикăна хуçалăхран уйăрма юрамасть.

Çуракине хăвăрт та ăнăçлă ирттересси халĕ ĕнтĕ бригадăсенче, звеносенче, уйри стансенче политикăлă-массăлă ĕçе, социалисăмла ăмăртупа стахановла юхăма анлăн сарса пынинчен килет.

Çураки вăхăтĕнче политикăлă агитацине организацилесе Сталинла Конституцине, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене халăх хушшинче анлăн ăнлантарса памала. Тĕнчери лару-тăру, Совет Союзĕн шалти пурнăçĕ çинчен, Чăваш республикĕн халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ, Чăваш республикĕ вăйлă тырпул туса илессипе Тутар тата Мордва республикĕсемпе тунă социалисăмла ăмăрту догăвăрне ăнăçлăн пурнăçлассси çинчен халăха ăнлантармала.

Парти райкомĕсен, агитаторсен, калаçусем ирттерекенсен, хаçат-журнал вуласа паракансен ĕçне тĕрĕс, кирлĕ пек йĕркелемеле. Вĕсем пур колхозниксемпе трактăриссем хушшинче хирте ĕçленĕ çĕрте, килте тата каннă вăхăтра пулса, политикăлă агитацине организацилеме пултарччăр. Агитаци ĕçĕ кашни бригадăра, звенора пултăр. Парти райкомĕсем агитаторсене кулленхи ĕçре пулăшса, йертсе пымала. Умра тăракан задача — çуракине 6 — 8 кун хушшинче пурнăçласси. Агитаторсене куллен-кун çĕнĕ хаçат-журналсем, информаци парса тăмала. Райкомсен агитаторсемпе йаланах çыхăну тытмала, мĕншĕн тесен агитаторсем лайăх ĕçлесо пынинчен çуракино вăхăтра, пысăк пахалăхпа ирттересси килет.

Çураки вăхăтĕнче хирте политикăлă агитацине организациленĕ чухне агитаци ĕçĕнчи пĕтĕм лайăх опытсемпе усă курмала. Ушкăнпа пуçтарăнса калаçусем туса ирттерни, хаçатсем вуласа пани, радио, кино, агитбригадăсем, социалисăмла ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăмасем, производствăлă канашлусем, колхозри тата бригадăсенчи стена хаçачĕсем кирлĕ. Кашни районăнах çураки вăхăтĕнче партилĕ-массăлă ĕçе организацилемели конкретлă план пулмала. Вăл план партипе комсомолăн кашни организацинче тата кашни коллективрах пулмала. Политикăлă агитаци ĕçне хирте, тырă акнă çĕрте организацилеиипе пĕрлех, парторганизацисем, колхозри клубсем йалта колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче ĕçлессине те йăвашлатмала мар.

Парторганизацисен, йалсоветсен, колхоз правленийĕсен, МТС-сен çураки вăхăтĕнче колхозниксемпе колхозницăсене, трактăриссемпе трактăрискăсене культурăпа йала тĕлĕшпе кирлĕ пур условисене те туса памала. Столовăйсем, ача площадкисемпе йаслисем, культпалаткăсем, хаçат-журналсем, шашкăпа шахмăтсем тата радио пулмала. Колхозниксем вальли культурăлă кану туса пани кирлĕ ĕçсенчен пĕри.

Социалисăмла ăмăртăва организацилесе, стахановла тата ударлă ĕçлессине анлăн сарса вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешме, кайра пыракансене малти вырăна кăларма парторганизацисен социалисăмла ăмăртăва пуçарса пымала, стахановла тата ударлă ĕçлекенсен щутне ӳстерес тĕлĕшпе куллен-кун ĕçлемеле. Тăшманла елементсем тунă сăтăрла ĕçсен йулашкисене, йалхуçалăх ертелĕн уставне пăснисене пĕтерме пĕтĕм массăна организацилемеле. Çав ĕçсене тумали çинчен ПСК(б)Парти Обкомĕ парти райкомĕсемпе пуçламĕш организацисене нумай хут асăрхаттарнă. Çак задачăсене большевикла пурнăçлани — Чăваш республикне Тутар тата Мордва республикĕсемпе тухнă социалисăмла ăмăртура хăй çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа, малти вырăн йышăнма пулăшĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн инструкцине пăсма йурамасть

Донецк облаçĕнчи 213 пуçламĕш парторганизацинче партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсем пулса иртнĕ те ĕнтĕ. Пухусенче коммуниссем пит активлă. Тухса калаçакансем парти комитечĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çивĕччĕн, большевикла критиклеççĕ, вĕсем партком сен çĕнĕ составне кандидатурăсем тăратас ĕç çине тата конференцисене делегатсем суйласа йарасси çине пысăк ответлăхпа пăхаççĕ.

Анчах чылай районсенче отчотпа суйлав пухăвĕсене ирттернĕ чухне ĕçе васкаса тăваççĕ тата ПСК(б)П Тĕпкомĕн инструкцине пăсса ĕçлеççĕ. Хăшпĕр предприйатисенче савăтри парткомăн çĕнĕ составне тăратмали кандидатурăсене малтан цехсенчи пухусенче сӳтсе-йавнă, вăрттăн сасăламали кандидатурăсене вĕсене тăратнă черетпе мар, президиум мĕнле тăвас тенĕ пек сӳтсе-йавнă. Дзержинский йачĕпе тăракан шахтăра (Сталино) пысăк йанăш тунă. Кунта районти конференцине йамали делегатсен составне вальли пуху палăртнă икĕ кандидатурăна вăрттăн сасăламали списокка кĕртмесĕр хăварнă. Орджоникидзе йачĕпе тăракан савăтра парткомăн отчотлă доклачĕ тăрăх йышăннă решенине отчота сӳтсе-йавнă хыççăн мар, суйлавсем туса ирттернĕ хыççăн йышăннă.

(ТАСС).

Герой-полярниксем Мускаврa

Çурçĕр полюсне çĕнсе илекенсем Украинăра çӳренĕ хыççăн Мускава таврăннă. Вĕсем Мускава таврăнсанах пысăк ĕçе тытăннă. Совет Союз Геройĕ И. Д. Папанин йулташ Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Тытăмĕн начальникĕн пĕрремĕш заместителĕн ĕçĕсене тума тытăннă.

Совет Союз Геройĕсем П. П. Ширшовпа Й. К. Федăрав йулташсем куçса çӳренĕ „Çурçĕр полюсĕ“ станцин ăслăлăх материалĕсене тĕпчеме тытăннă.

Совет Союз Геройĕ Е. Т. Кренкĕл йулташ политехничĕски музейре „Çурçĕр полюсĕ“ станцин оборудовани выставкине уçма хатĕрленнине пырса пăхнă. Вăл выставкăна йĕркелесе майлаштарас çĕрте ĕçлекен ăслăлăх работникĕсемпе художниксене чылай кăтартусем панă. (ТАСС).

Суйлав кампанийĕ Грузин тата Армйан СС Республикĕсенче

Ионă Мушкудиани (Гедутăвск колхозĕн (Грузи) мухтавлă бригадирĕ) кандидатурине колхоз пухăвĕнче кăмăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Вăл—арахис культурине (çу тумали культура) рекордлă тухăçлă туса илнĕ чи пĕрремĕш бригадир. Иртнĕ çулта Ионă Мушкудиани бригади гектартан 25-шер центнĕр арахис пухса илнĕ. Унăн бригади Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕ пулнă.

Ионă Мушкудиани—коммунис, активлă общественник, йалсовет членĕ. Колхозра ăна йуратаççĕ, хаклаççĕ. Вăл пуйан та культурăлă пурнăç тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен работник.

Колхоз пухăвĕнче пурте пĕр шухăшлăн йышăннă постановленире çапла çырнă: „Грузин СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитетĕнчен Ионă Мушкудианине Опшквитск суйлав округĕн суйлав комиççи членне çирĕплетме ыйтас“,— тенĕ.

Апрелĕн 16-мĕшĕнче Грузин СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççисене пурĕ 237 çирĕплетнĕ.

Орденлă Грузин СС Республикĕн Верховнăй органĕн суйлавĕсене чи пирвай туса ирттерме рабочисен, колхозниксен тата совет интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕсем 2.133 çын пысăк чыслăхлă пулнă. Вĕсене суйлавçăсем нумай çынлă пухăвĕсенче тăратнă.

Çавăн пекех Армйан СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ те Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем тĕлĕшпе округсенчи суйлав комиççисен составне çирĕплетнĕ.

Пĕтĕмпе Арменире 256 комиççине пурĕ 2.816 çынна çирĕплетнĕ, вĕсем хушшинче партире тăмаңнисем—43 процент. Комиççи членĕсенчен çурри ытла—колхозниксем. Округсенчи комиççисенче—515 хĕрарăм.

Армйан СС Республикĕн Верховнăй органĕн суйлавĕсене йертсе пыма Армени ĕççынийĕсем округсенче шанчăклă, ĕçре тĕрĕсленĕ, социалисăм ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса ĕçлекен çынсене шаннă.

(ТАСС).

Российăри чи малтанхи чукунçула тунăранпа 100 çул тултарнă

Апрелĕн 17-мĕшĕнче Российăра пăспа ĕçлекен чи малтанхи чукунçула тунăранпа шăпах 100 çул тултарнă. 1838 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче Царскойе Çело—Петербург чукунçулĕ тăрăх пĕрремĕш пăравус çӳреме пуçланă.

Паллă, тĕнчере чи малтанхи чукунçула Англире 1825 çулта Стефенсон тунă пулнă. Российăра Царскойе Çело çулне уçаччен пилĕк çул малтан улпут алли́нчи техник Черепанăв Нижне-Тагил (Урал) савăтĕнче чи пирвайхи хут пăравус тунă. Чукунçул тăвас тĕлĕшпе вырăс изобретателĕсем пĕр хут çеç мар тăрăшнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулман. Микулай патша пĕр Австри çыннин Герстнĕр чехăн сĕнĕвне кăна йышăннă. Çапла вара, чи малтан тунă çул патшан çуллахи резиденцине Петербургпа çыхăнтарнă.

Российăри чукунçулсен тĕп строительствине 1843—1851 çулсенче Мускав—Петербург чукунçул линине тума тытăннă хыççăн кăна пуçланнă.

* * *

Чукунçул тĕлĕшпе патша Российĕ тĕнчери ытти государствăсем хушшинче 21—22-мĕш вырăнта тăнă. 1913 çулта Российăри пур чукунçулсем тăрăх та талăкра 27 пин вакун çеç туртарма пултарнă. Таварсене пĕтĕмпе те 158 мĕлйун тоннă кăна туртарнă.

Совет Союзĕнче чукунçул транспăрчĕпе таварсем туртарнине илсен, 1937 çулта вăтам шутпа кашни талăкра 89.833 вакун тийенĕ. 1937 çул хушшинче чукунçулсем тăрăх пурĕ 517 мĕлйун тоннă груз туртарнă.

Совет çĕршывĕ чукунçул йенĕпе хăватлă державă пулса тăчĕ.

(ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

■■ Апрелĕн 15-мĕшĕнче Астрахаңрен Горькине килме „Серго Орджоникидзе“ йатлă пăссажирсене лартса çӳрекен пăрахут тухнă. Апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа Астрахаңпе Горьки хушшинче пăрахутсем йĕркелĕ çӳреме пуçлаççĕ.

■■ Краснодар крайĕнчи, Щербинăвск районĕнчи „Партин 17-мĕш сйесе“ тата Октăбĕр революцийĕ 14 çул тултарнă йачĕпе тăракан колхозсенче — паллă бригадирсем Костенкопа Кимлач йулташсем ĕçлекен колхозсенче—кĕрхи тырăсене çумлас ĕç пуçланнă.

■■ Март уйăхĕнче „Орджоникидзе уголь“ трестĕнчи 437 горняк кашнийех 1000-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ, вĕсем нормăна 230 процентшер тултарнă. Камрăк кăларас çĕрте ĕçлекен чи лайăх маçтăрсем—Савченко, Елистратăв тата Сварган 1.800-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ, Федăр Панков забойщик—2.224 тенкĕ илнĕ.

■■ Иртнĕ çулта Тамбов облаçĕнчи 9 колхоз сухан лартса туса 11.105.819 тенкĕ тупăш илнĕ. Максим Горький йачĕпе тăракан йалхуçалăх ертелĕ суханран 2 138 тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçалхи çул облаçри колхозсен стахановла звенисем гектартан 400 центнĕр сухан туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

■■ Атăл çинчи Нимĕçсен республикĕнчи пур колхозсем те уйри ĕçсем вăхăтĕнче ача йаслисем тунă. Вĕсенче 12 пин ача пулмала. (ТАСС).

Уйăх планне 175 процентран кайа мар тултаратпăр

Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕ чаплă уйава—майăн 1-мĕшне çĕнĕ çитĕнӳсем тупипе кĕтсе илет. Уйава хатĕрленес ыйтупа йатарласах комсомолецсен тата хапрăкри рабочисемпе служащисен пухăвĕсем пулса иртнĕ. Вăл пухусенче уйава хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеме комиççи суйланă, социалисăмла ăмăртăва сарса кашни цех, кашни стахановец ăмăртăва тухнă.

Хапрăк апрел уйăх планне 175 процентран кайа мар тултарма, стахановецсемпе ударниксен йышне 70 процента çитерме обязательство илчĕ.

Çавăн пекех бондарнăй тата çăматă йăвалакан цехсем те апрел уйăх планне майăн 1-мĕшне 175 процентран кайа мар тултарма обязательство илчĕç.

Стахановецсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна халĕ ăнăçлăнах тултарса пыраççĕ. Ака, Спирин, Федосейĕв, Долгорукăвă, Кожановă, Казачковă йулташсем кашни кунах хăйсен нормисене 150—200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Йакăвлĕв.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра Балагера районĕнче республиканецсен позицисем улшăнман. Пăлхавçăсен вăйлă атакисене сирсе пăрахнă. Республикă чаçĕсем малала кайассине чăрмантарас шутпа, пăлхавçăсем Вальфогон йатлă йалтан кăнтăр йенчи района шыв илтернĕ.

Сан-Матео (Ебро йуханшывĕнчен кăнтăрала) районĕнче пăлхавçăсем авиаципе, артиллерипе тата танксемпе хыттăн тăнă пирки республикă чаçĕсене кайала чакма тивнĕ.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче Винароса (Вăтаçĕрти тинĕс çыранĕ) кайакан çул патĕнче пĕр кун кунĕпех хаяр çапăçусем пулса пынă. Фашиссен вăрçă хатĕрĕсем нумай пулнă пулсан та, вĕсем Винарос патнелле малала кайма пултарайман. Республиканецсем тĕлĕнмеле паттăрлăхпа вăрçса, пăлхавçăсем малала кайассине тытса чарнă. Хăш-пĕр вырăнсенче вĕсем Итали чаçĕсене кайала хăваласа йанă.

Естремадура фронтĕнче апрелĕн 15-мĕшĕнче пăлхавçăсем Сиерра Алтамира районĕнче наступлени тума пуçланă. Республикă чаçĕсем пăлхавçăсене кайала хăваласа йанă. Пăлхавçăсем хăйсен малтанхи линийĕсене кайса вырнаçнă.

Ытти фронтсенче лару-тăру улшăнман.

(ТАСС).

Ф. И. Шальапин артис вилнĕ

Апрелĕн 12-мĕшĕнче Парижре Ф. И. Шальапин артис вилнĕ, вăл 65 çулта пулнă.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Врач медицинă сестрисене аманнă çынна çыхса йама вĕрентет.

(Союзфото).

Китайри вăрçă

Çурçĕр Китайра Китай çарĕсен малта пыракан чаçĕсем Исйань хулин (Шаньдун провинци) кăнтăр йенчи тата кăнтăрпа хĕвеланăç йенчи хапхисене пырса кĕнĕ, çавăн пекех вĕсем Исйаньрен çурçĕрпе хĕвелтухăçнелле чылай позицисене йышăннă. Исйань хулинче йулнă йапонецсем,—Китай чаçĕсем вĕсене хупăрласа илнĕ,—вăрçă хатĕрĕсем тата çимели продуктăсем çитменнипе аптраççĕ.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче Йапони çарĕсем Цзйаньтан (Вăтам Китай) йатлă йуханшыв урлă каçма хăтланнă. Анчах Китай çарĕсем артиллерирен вăйлă пеме пуçласан, йапонецсем шыв урлă каçма чарăннă. Китай çарĕсем пенипе Йапони салтакĕсем нумай вилнĕ тата аманнă. Йапонин шыв урлă каçмалли сем пе катерĕсем те нумай пĕтнĕ.

Китай çарĕсем Фуйан йатлă хула çине контрнаступлени тума пуçланă.

Шанхай çывăхĕнче Китай партизанĕсем Йапони çарĕсем çине халĕ те атакăсем тăваççĕ. Çучжоупа Уса хулисем çывăхĕнчи вырăнсем партизансен аллинче.

(ТАСС).

Германи фашисĕсем Австрире хуçа пулса ĕçлеççĕ

ПРАГĂ, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Венăра Австри граждăнĕсен аллинчи ылттăна тата йут çĕршыв укçи-тенкисене Германи маркисемпе обйазательнă майпах улăштарасси çинчен иккĕмĕш хут панă хушăва пичетлесе кăларнă. Çавсене улăштармали йулашки срук—апрелĕн 25-мĕш. Вăл хушăва пурнăça кĕртменнисене хытă айăпласçĕ.

Фашисла пичет Австрире пурăнакан халăхсене „Германи правительствин економикăлă ĕçĕсене сапотаж тăвассине чарма“ чĕнет тата Германи фашисăмĕн вăрçă хатĕрленмели тăватă çуллăх планне пурнăça кĕртес ĕçе хутшăнма чĕнет.

Пĕтĕм вăйа фашисла варвăрсене хирĕç

ПАРИЖ, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Испанири социалисла çамрăксен пĕрлешĕвĕн генеральнăй секретарĕ—Каррильо пĕтĕм тĕнчери çамрăксене çапла чĕнсе каланă:

„Пирĕн пурнăç, пирĕн культура,—тенĕ чĕнсе каланинче,—сирĕн малашлăх пекех, çамрăк ăравăн пĕтĕм вăйне, пĕр çĕре пĕрлешсе, фашисла варвăрсен преступленийĕсене хирĕç кĕрешес çĕре, мирлĕ пурнăça сыхласа усрас тата цивилизацине культурăна сыхласа усрас ĕçе тăратмала. Испани çамрăкĕсем, фашисăмпа интервенцине хирĕç çирĕппĕн тата пĕр пăркаламасăр кĕрешсе пыраканскерсем, сирĕн ответа, сирĕн ĕçĕрсене тата сирĕн пулăшăва кĕтеççĕ“,— тенĕ.

Йулашки хыпарсем

Англипе Итали хушшинчи килĕшӳ

Англири Рейтер телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕнче Англипе Итали хушшинче килĕшӳ туса алă пуснă.

Килĕшĕве алă пусса çирĕплетнĕ хыççăнах Чемберленпа Муссолини пĕр-пĕрин патне саламлă телеграммăсем йанă.

(ТАСС).

Йапонецсем вĕлерекен газсем йараççĕ

Китайра вăрçакан Йапони çарĕ Китай çарĕсене хирĕç вĕлерекен газсем пĕрре кăна мар йанă. Вĕлерекен газсем тултарнă бомбăсене Йапони самолечĕсем Тайерчжуан патĕнче пăрахнă.

Хальхи вăхăтра Йапони командованийĕ, Китай çарĕсем йапонецсене вĕлерекен газсемпе тултарнă снарйадсемпе переççĕ, тесе провокаци сарнă.

Ку ĕнтĕ вăл йапонецсем Шаньдун провинцинче вĕлерекен газсемпе татах та анлăн усă курма хатĕрленнине пĕлтерет. Вĕсем унта, хăйсем вĕлерекен газсемпе усă курнине сиресшĕн, Китай çарĕ çинчен елек сараççĕ.

(ТАСС).

Итали пăлхавçăсем патне пулăшу йарать

ПАРИЖ, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Тантер портне Италин „Фирензе“ йатлă пăрахучĕпе Итали салтакĕсене пурĕ 300 çын илсе пынă. Вăл салтаксене Генуйкаран тата Пальмăран (Майорка утравĕ) илсе килнĕ. Салтаксемпе пĕрле вăрçă хатĕрĕсем те чылай.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Епӗ мӗнле ӗҫлетӗп

Епӗ виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ парти райкомӗн инструкторӗ пулса ӗҫлетӗп. Хамӑн ӗҫе йӗркелетӗп. Парти шапнине ӗҫре кӑтарма тӑрӑшатӑп. Епӗ инструктӑр пулса ӗҫлекен участкӑ район центрӗнчен 12—33 километр айакра. Апла пулин те хамӑн вӑхӑта епӗ парти пуҫламӗш организацисенче, нӗччен коммуниссем патӗнче, партинче тӑман активиссем патӗнче ирттеретӗп. Парти пуҫламӗш организацисенче парти пухупе мӗнле туса ирттермелли ҫинчен, пуху протоколӗсене йӗркелесси ҫинчен, парти документӗсене сыхласа усрасси ҫинчен тата коммуниссене парти поручениӗсем парассипе вӑл поручениссене мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен тӗрӗслесе тӑма пулӑшатӑп. Ҫапла ӗҫлесе пынине пула, манӑн участкӑри коммуниссем самайах ӳссе пыма пуҫларӗҫ. Акӑ, Йапӑм йалсовет председателӗ пулса ӗҫленӗ парти кандидачӗ М. Ковальов йулташа районри социаллӑ обеспечени пайӗн пуҫлӑхне лартнӑ. Халӗ ӑна парти кандидатӗнчен члена куҫарнӑ. Ҫавӑн пекех Ӗ. Ӳсейкин йулташ та йапӑхах ӗҫлемест. Халӗ вӑл Чемей йалсовет председателӗ пулса ӗҫлет. Епӗ вӗсене парти членне куҫма пулӑшрӑм, хамах вӗсене члена куҫма рекомендаци патӑм.

Епӗ партинче тӑман активиссем мӗнле ӗҫленине, мӗнле ӳссе пынине те сӑнасах пыратӑп, вӗсене, чи хастаррисене, парти ретне кӗме пулӑшса пыратӑп. Тойкильт йалсовет председателӗ Иван Йегорӑв йапӑх мар ӗҫлет. Вӑл совет ӗҫӗнче 1930 ҫултанпа ӗҫлет ӗнтӗ, унтанпа Йегорӑв йулташ пур йенчен те ӳсрӗ. Февраль уйӑхӗнче епӗ Йегорӑв йулташ патӗнче пултӑм, ун чухне парти кандидатне кӗресси ҫинчен каласрӑмӑр. Района пырса ҫӳренӗ чухне ман пата, парти райкомне кӗрсе тухма чӗнтӗм, мӗнле литературӑсем ытларах вуламалли ҫинчен кӑтартса парартӑмччӗ. Халӗ Йегорӑв йулташ райсӑвком ҫумӗнчи парти пуҫламӗш организацине хӑйне парти кандидатне илме ыйту ҫырса пачӗ. Ҫавӑн пекех, манӑн участкӑра пурӑнакан Ваҫили Данилӑв колхозник-ордѐноносец те парти кандидатне кӗчӗ.

Хамӑн политикӑлла пӗлӗве ӳстерес тесе куллен тӑрӑшса вӗренетӗп. Конференцисене лайӑх хатӗрленсе кайатӑп, пур темӑсем тӑрӑх та лайӑх паллӑ илсе пыратӑп.

Кусемсӗр пуҫне, Чуманкасси йалсоветӗнче колхоз активӗн кружокне йертсе пыратӑп. Кружока 17 ҫын ҫӳрет. Ҫав йулташсене епӗ пурне те агитатӑрсемпе пропагандиссем пулма тата партине кӗме тивӗҫлӗ ҫынсем пулччӗр, тесе хам пӗлнине пурне те вӗсене пама тӑрӑшатӑп.

ССРС Верховнӑй Совечӗн суйлавне хатӗрленнӗ вӑхӑтранпа партинче тӑман активиссем, агитатӑрсемпе пропагандиссем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Сӑмахран, Чуманкасси йалсоветӗнче РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли Положенисене вӗренме пурӗ 18 кружок тунӑ. Парти райкомӗ ҫав кружоксене йертсе пыма партинче тӑман активиса Воронин йулташа сӗнӗнлетрӗ. Епӗ Воронин йулташа кулленхи ӗҫре йалапах пулӑшса пыма тӑрӑшатӑп, ӑнланман ыйтусем ҫине вӑхӑтра ответсем паратӑп.

Ҫаксемпе пӗрлех манӑн ҫитменлӗхсем те сахал мар. Епӗ халичченех сочувствуйушчисем хушшинче партилӗ ӗҫе тивӗҫлипе туса пыман. Парти райкомӗ те сочувствуйушчисене пухса хӗл каҫиччен пӗр канашлу ҫеҫ туса ирттернӗ. Парти пуҫламӗш организацисем те пухусене йалӑнах хупӑ туса ирттереҫҫӗ. Ҫапла пара, сочувствуйушчинче тӑракан йулташсене парти сывӑхне йавӑҫтарас чухне, епӗр вӗсене хамӑртан уйӑрса тӑратпӑр. Манӑн ӗҫри тепӗр ҫитменлӗх — вӑл нӗччен коммуниссене кулленхи ӗҫе активлӑн хутшӑнса пыма ҫителӗксӗр пулӑшни пулать. Акӑ, парти кандидачӗсем Илйа Анекин, Федӑр Афанасйӗв йулташсем район центрӗнчен 30—33 километр айакра пурӑнаҫҫӗ. Епӗ вӗсем патӗнче питӗ сахал пулнӑ, пулӑшу та параймастӑп, мӗншӗн тесен тухса ҫӳреме пирӗн транспарт ыйтупе татса памаҫ.

Парти райкомӗн ҫав ӳлте асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерес пирки халех кирлӗ мерӑсем йышӑнмала. Айакра пурӑнакан коммуниссемпе ҫыхӑну тытассине хальхинчен темиҫе хут лайӑхлатмала.

ПСК(б)П Тутаркас райкомӗн инструкторӗ **Ф. И. Иванов.**

Ӗҫе лайӑхлатасси хамӑртан килет

Коопинсойузри парторганизацин ӗҫ планӗ ҫук. Кунти парторг Трофимӑв йулташ каланӑ тӑрах: „Планпа ӗҫлесе пыма май ҫук, мӗншӗн тесен, коммуниссем час-часах районсене командировкӑна кайаҫҫӗ". Паллах ӗнтӗ, Трофимӑв йулташ калани тӗрӗс мар. Коммуниссем командировкӑна кайни парторганизацине план тӑрӑх ӗҫлесе пыма чармантармаст. „Командировкӑна кайнӑ текен сӑлтавпах парти пухӑвӗсем те йӗркелӗ пулса иртмеҫҫӗ. Хӑшпӗр чухне ик-виҫӗ уйахран аран-аран пӗр пуху пулкаланӑ.

Отчотпа суйлав пухӑвӗнче парторг Трофимӑв йулташ парторганизаци ӗҫӗ ҫинчен отчот туса пачӗ. Ун отчочӗ хыҫҫӑн пренире тухса каласнӑ йулташсем парторганизаци коммуниссене партилӗ воспитани парас тӗлӗшпе начар ӗҫлесе пынине кӑтартрӗҫ. Парторганизаци ҫумӗнче политкружок ӗҫлемест. Ҫавӑнпах ӗнтӗ хӑшпӗр коммуниссем ниҫта та вӗренмеҫҫӗ.

— Парторганизаци ҫумӗнче политкружок организацилесе, вӑл кружокра коммуниссемпе партире тӑман активиссене вӗрентсе пымала, теҫҫӗ пренире каласакансем.

Пӗлтӗрхипе танлаштарсан, парторганизаци парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе ҫитӗнӳсем тунӑ. Парти кандидатӗнчен члена пӗр ҫын куҫарнӑ, кандидата пӗр ҫын илнӗ, халӗ тата сочувствуйушчисен ретне кӗме икӗ ҫын заявлени панӑ. Анчах ку ҫителексӗр. „Красный Молот" тата ытти ертелсенче ӗҫлекен рабочисем хушшинче те партине кӗме тивӗҫлӗ ҫынсем пур. Акӑ „Красный Молот" ертелӗнче ӗҫлекен тимӗрҫсем - стахановецсем — Бронникӑв Иван, Малахӑв, Бронникӑв Алексей, Молодӑв йулташсем пур. Анчах вӗсемпе никам та уйрӑмӑн ӗҫлемест, вӗсем политика тӗлӗшӗнче те пурнӑҫран йулса пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пекех кунта комсомолецсене большевикла воспитани парассине кирлӗ пек организацилемен. Комсомолецсен хушшинче ӗҫлеме тесе, пурнӑҫпа йӑла тӗлӗшпе пасалнӑ Журавльова уйӑрса хунӑ пулнӑ. Вӑл, паллах, комсомолецсене воспитани пама пултаракан ҫын мар. Ун пек ҫынсене комсомол организаци ҫывӑхне йани те вырӑнсӑр.

Кандидатран парти членне куҫарас ӗҫре те ҫитменлӗхсем пур. Ҫавӑнпах Васильков йулташ парти кандидатӗнче 1926 ҫултанпа тӑрать.

Коопинсойузри парторганизаци умӗнче тӑракан тӗп задачӑсенчен пӗри вӑл — халӑх тӑшманӗсем тунӑ сатӑрлӑ ӗҫсен йулашкийӗсене пӗтересси. Парторганизаци тата йертсе пыракан ӗҫсенче руководителсем пулса ӗҫлекен коммуниссен большевикла сыхалахӗ ҫителӗксӗр пулнӑ пирки, Коопинсойуз системинче халӑх тӑшманӗсем ларнӑ, сатӑрлӑ ӗҫсем туса пынӑ. Акӑ Канашри ертелӗн пуҫлӑхӗ троцкисӑ пулнӑ, вӑл ертелӗн укҫине 14000 тенкӗ вӑрланӑ. Тивӗшри ертелре кулаксем ларнӑ, вӑл 10.000 тенкӗ ҫаратнӑ.

Парти организацин большевикла сыхӑлӑха ӳстерсе, халӑх тӑшманӗсен йулашкисене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса, тӗпӗ тымарӗпех тӑпӑлтарса пӑрахассипе хастарлӑн ӗҫлемелӗ.

Пренире пур коммуниссем те тухса каласрӗҫ, кирлӗ сӗнӳсем парса хӑварчӗҫ.

— Ӗҫри ҫитменлӗхсене шута илсе, малашне вӗсене тӳрлететпӗр. Парторганизаци ӗҫне лайӑхлатасси вӑл хамӑртан килет, — теҫҫӗ коммуниссем.

М. Микули.

Шупашкар хули.

Йанӑшсене хӑварт тӳрлетмеле

Шупашкарти пуҫламӗш парторганизацисенче отчотпа суйлав пухӑвӗсем пуҫланнӑранпа 7 кун иртрӗ ӗнтӗ. Ҫак вӑхӑтра парти комитечӗн секретарӗсем, парторгсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен коммуниссен умӗнче отчотсем туса пачӗҫ. Чылай парторганизацисем ҫитес кунсенчех отчотсем тума хатӗрленеҫҫӗ. Хӑшпӗр парторганизацисем отчотпа суйлав пухӑвӗсене мӗнле хатӗрленмелине тӗрӗс ӑнланман. Вӗсем иртнӗ ҫулта отчотпа суйлав пухӑвӗ йышӑннӑ решенисене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслеме комиссисем, бригадӑсем тата группӑсем тума тапратнӑ.

Ку йанӑша тума хула комитечӗ те пулӑшнӑ. ПСК(б)П Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ Лапин йулташ „Иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗ йышӑннӑ решенисене пуҫламӗш парторганизацисем мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе тухмала", тесе тухса каланӑ хула комитечӗн йулашки пленумӗнче. Ҫакӑн хыҫҫӑн пуҫламӗш парторганизацисенчи коммуниссен пухӑвӗсенче парти пухӑвӗ йышӑннӑ решенисене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслеме комиссисем, группӑсем тума тапратнӑ.

„Чӑваш Коммунӗ" хаҫат та хула комитечӗн инструкторӗ Атлашӗва йулташ статйине апрелӗн 16-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнипе йанӑш тунӑ. „Хаҫатра критиклене хыҫҫӑн" йатлӑ заметкӑра: Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизаци парти Тепкомӗ партин йертсе пыракан органӗсен суйлавӗсене ирттересси ҫинчен йышӑннӑ постановленине тепӗр хут сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, „пуху иртнӗ вӑхӑтри пухусенче йышӑннӑ решенисене мӗнле пурнӑҫланине тӗрӗслеме 3 ҫынран комиссӗ турӗ. Комиссире тӑракан Богданӑв, Трофимӑва, Кульасӑва йулташсем тепӗр кунах ку ӗҫе тӗрӗслеме тытӑннӑ", тесе ҫырнӑ. Паллах, ку бригадӑ членӗсем парторг отчочӗ хыҫҫӑн парторганизаци ӗҫӗсем ҫинчен иккемӗш доклад тума хатӗрленнине пӗлтерет. Ку йанӑш. Вӑл коммуниссен активлӑхне тата критикӑна сарассине чакарать. Парторганизаци ӗҫӗсене тӗрӗслессинӗ, комиссисем тунипе мар, отчотпа суйлав пухӑвӗсенче парти комитечӗн секретарӗсемпе парторгсен отчочӗсене итленипе тата кулленхи ӗҫре пӗтӗм коммуниссен масси тӗрӗслени урлӑ туса пымала.

Парти пухӑвӗ йышӑннӑ решенисене парторганизаци мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен отчотпа суйлав пухӑвӗсенче партком секретарӗсемпе парторгсен хӑйсен отчочӗсенче тӗплӗн каласа памала. Коммуниссен парторганизаци ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене хӑйуллӑн критиклемеле.

Чӑваш шкулӗсенче вырӑс чӗлхине вӗрентесси

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ „Чӑваш республикӗнчи вырӑс мар шкулсенче вырӑс чӗлхине обиазательнӑ йӗркепе вӗрентесси ҫинчен" йатарласа постановлени йышӑнчӗҫ. Республикӑри чӑваш, тутар, мордва шкулӗсенче вырӑс чӗлхине вӗрентес ӗҫ йапӑх пынине палӑртса, Чӑваш республикӗн правительствипе парти Обкомӗ ку ӗҫе йӗркелес йенӗпе татӑклӑ кӑтартусем пачӗҫ.

1938 ҫулхи ҫентабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа мӗн пур чӑваш, тутар тата мордва шкулӗсенче: пуҫламӗш шкулта — 2-мӗш класран, туллимар вӑтам тата вӑтам шкулсенче — 3-мӗш класран тытӑнса, вырӑс чӗлхине обиазательнӑ йӗркепе вӗрентмелле пулать.

Пуҫламӗш шкултан вӗренсе тухакансен вырӑс калаҫу чӗлхине ӑнланакан пулмала, йӗри-таврари пурнӑҫ йавленийӗсем ҫинчен вырӑсла ҫырса йе сӑмахпа каласа пама пӗлмеле, вӗсен кун ваььи ҫителӗклӗ таран сӑмах пуйанлӑхӗ пулмала.

Вӑтам шкултан вӗренсе тухакансен вырӑс чӗлхин тӗп саккунӗсемпе правилисене пӗлмеле, вырӑсла тытӑнмасӑр, ирӗклӗн вуламала, урӑхла каласан, илемлӗ литературӑпа ӑслӑлӑх литературине ӑнланакан пулмала, вуласа тухнипе, ҫаплах хӑйсен шухӑшӗсене те, вырӑс чӗлхипе тӗрӗс каласа тата ҫырса пама пӗлмеле.

ЧАССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариатне Чӑваш шкулӗсем валльи тунӑ вырӑс чӗлхи программине майӑн 1-мӗшӗ тӗлне пӑхса тухма, 1938—39 вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ тӗле вырӑсла букварне вуламалли кӗнекесем, вырӑс чӗлхи учебникӗсемпе вырӑсла — чӑвашла словар пичетлесе кӑлармалла хушнӑ.

Пуҫламӗш шкулсенче, туллимар вӑтам тата вӑтам шкулсенче ӗҫлекен учительсен вырӑс чӗлхипе вӗрентме пӗлӳ ҫителӗксӗррине шута илсе, Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн учительсем валльи вырӑс чӗлхине кӗске вӑхӑтлӑх курссем уҫса, вӗсенче пӗтӗмпе 2.300 учитель вӗрентсе кӑлармала.

Хальхи вӑхӑтра пуҫламӗш шкулсенче учительсем ҫитмеҫҫӗ. Ӗҫлекен учительсен те чылайӗшӗн пӗлӗвӗсем ҫителӗксӗр. Ҫавӑнпа та, пуҫламӗш шкулсене тивӗҫлӗ учительсем парса ҫирӗплетес тата учительсен йышне лайӑхлатас ӗмӗтпе, Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариатне вӑтам шкул пӗтеринисенчен 200 учитель кӗске вӑхӑтлӑх курсӑсем урлӑ вӗрентсе кӑлармала хушнӑ.

Туллимар вӑтам шкулсенче тата чӑваш, тутар, мордва вӑтам шкулӗсенче вырӑс чӗлхине вӗрентекен преподавательсен пӗлӳне хӑпартас шутпа, ҫулахи каникул вӑхӑтӗнче 200 ҫын валльи уйӑх ҫурлӑх курссем уҫӑлаҫҫӗ.

1938 ҫулхи ҫентабӗрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа мӗн пур педагогикӑлла училищӑсенче, пединститутпа учительсен институтӗнче те вырӑс чӗлхине обиазательнӑ йӗркепе вӗрентмелле пулать. 1938 ҫулхи кӗркуннерен Чӑваш пединститучӗ ҫумӗнче вырӑс тата чӑваш чӗлхисемпе ӑслӑлӑх работникӗсем хатӗрлекен аспирантура уҫӑлать.

Судаков.

Станкиссен курсӗ

Канашри вакунсем йусакан савӑтра апрелӗн пуҫламӗшӗнче станкиссен курсӗ уҫӑлчӗ. Курсра пурӗ 30 ҫын вӗренет, вӗсенчен хӗрарӑмсем 15.

А. Медведӗв.

Массӑпа ҫыхӑну тытассине вӑйлатнӑ

ТӐВАЙ. Партин йертсе пыракан органӗсене суйлама хатӗрленесси сарӑлса пырать. Пур пуҫламӗш парторганизацисемпе кандидат групписенче те, парти Тӗ комӗ партин йертсе пыракан органӗсен суйлавӗсене ирттересси ҫинчен йышӑннӑ решенине, суйлав ирттермелли инструкцине сӳтсе-йавнӑ. Парти райкомӗ пур пуҫламӗш организацисем умӗнче те отчот тӑвать.

Пуҫламӗш организацисем, кандидат групписем тата уйрӑм коммунис-агитатӑрсем партире тӑман массӑсемпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ, йалсенче РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлама хатӗрленнӗ май, парти райкомӗ вырӑнсенче ӗҫлекен агитатӑрсене пухса ҫеминар туса ирттернӗ.

Колхозри чи лайӑх ҫынсем партине кӗреҫҫӗ. Ҫак ҫула кӗнӗренпе 12 ҫынна парти кандидатне, 7 ҫынна кандидатран члена куҫарнӑ. Партин йертсе пыракан органӗсен суйлавне хатӗрленме тытӑннӑ кунранпа партине кӗме 6 ҫын ыйту панӑ.

Т. Майорӑв. А. Пикишкин.

Ҫӗнӗрен 24 агитатӑр

КАНАШ. ПСК(б)П райкомӗ ҫумӗнче 10 кунлӑх курсран 24 агитатӑр вӗренсе тухрӗҫ. Халӗ ҫак агитатӑрсем пурте колхозсенче РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламалли Положенисене вӗрентес тӗлӗшпе ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

Ал. Медведӗв.

М. Ҫергейӗв

Испани халӑхӗ мобилизациленет

Англи правительстви хӳтлесе пыракан интервентсем (Итали, Германи) йулашки уйахсенче Испанине ҫӗнӗрен пысӑк подкрепленисем, пит нумай самольотсем, артиллери, танксем тата ытти йышши хӗҫпӑшалсем йачӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах Испанин саккунлӑ правительстви малтанхи пекех хӗҫпӑшал сутӑн илме пултараймаст.

Иул ҫӗршыв пичечӗ палӑртнӑ тӑрӑх, Франкона интервентсем ҫӗнтермеле тӑвассишӗн Англи уҫҫӑнах тӑрӑшать.

Йулашки ернесенче пӑлхавҫӑсемпе интервентсем Арагони фронтӗнче тунӑ ӑнӑҫусем вӑрҫӑ интервентсемшӗн усӑллӑ пӗтессине, фашиссемпе тӗрлӗрен реакционерсем ҫавӑн пек сӑнласа пама хӑтланаҫҫӗ пулин те, пӗртте татса памаҫҫӗ-ха. Фашиссемпе реакционерсем Испани халӑхӗн хирӗҫ тӑма пултаракан вӑйне тата вӑл кирек мӗнле йӑвӑрлӑхсене те тӳсме хатӗррине хакламаҫҫӗ.

Испани халӑхӗ ҫакна лайӑх ӑнланать: фашисӑм ҫӗнтерни пӗтӗм Испанине талӑшпех концентрацилӗ лагӗр туса хурассине пӗлтерӗччӗ. Испани хӑйӗн чи лайӑх ывӑлӗсемпе хӗрӗсен йунӗ айне пулнӑ пулӗччӗ. Пушхир туса хунӑ Абиссини примерӗ, Адис-Абеба примерӗ, унти халӑхран 75 процентне фашисла пуҫкасансем вӗлерсе пӗтерни — ҫаксем Испани халӑхӗшӗн лайӑх урок пулаҫҫӗ.

Фашисӑм ҫӗнтерни — вилӗм пулнине, ӗмӗрсем хушши аталанса пынӑ культурине пӗтерсе хурассине чуралӑхна чуханлӑх пулнине ӗнесес тесен Испани халӑхӗн ытла инҫех те пӑхма кирлӗ мар. Фашисӑм йарса илнӗ хуласемпе йалсем вилӗмлӗ пусмӑр тӳсни, Андалузире, Естремадурӑра тата ытти вырӑнсенче чуралӑхна тискерлӗх тӳсекен миллионшар испанецсем ахлатса йӑнӑшни пӗтӗм республикӑлла Испанире илтӗнет.

— Пӑхӑр-ха, республикӑн кирлӗ хулисенчи хӗрарӑмсене, нӗчӗк ачасене тата старриксене фашисла льотчиксем йепле тискер хаййарлӑхпа вӗлере-вӗлере пӗтереҫҫӗ, пӑхӑр-ха, хӑйсен вилӗмлӗ грузне Барселонӑ ҫине пӑрахнӑ Германипе Итали бомбардировщикӗсем мӗн туса хучӗҫ. Пӑхӑр, вара есӗр фашиссем Барселонӑра хуҫа пулса тӑрас пулсан, вӗсем мӗн тери хыттӑн пусмӑрлассине ӑнланса илеттӗр. Вӗсем Барселонӑ хулин урамӗсене халӑх йунӗпе шӳтернӗ пулӗччӗҫ, вӗсем хулана кӗл купи туса хунӑ пулӗччӗҫ.

„Лас Нотисиас" хаҫат нумайах та пулмаст ҫакӑн пек ҫырнӑ ӗнтӗ. Испани халӑхӗ фашисӑм ҫӗнтерес-мӗн пулсан хӑйне мӗн кӗтнине, унчухне вара интервентсем пӗр чарусӑрах вилӗм сарассине тата пӗтерессине Испани халӑхӗ ӑнланать.

Ҫӗршыв ҫине пырса капланнӑ хӑрушлӑха Испани правительстви халӑхран пытармаст. Анчах та халӑхӑн парӑнас мар ирӗклӗхне нимӗн те хуҫма пултараймаст. Фашиссем республикӑ тылӗнчи халӑха хӑратса ӳкерме шутлани арканса кайрӗ. Ҫак кунсенче Испани правительствине реорганизациленӗ, унӑн составне икӗ профсойуз центрӗн — рабочисен Пӗтӗмӗшлӗ Сойузӗпе Ӗҫлевӗн анархисла Нациллӗ Конфедераци центрӗсен представительӗсем кӗнӗ, ҫав правительствӑ хальпит нумай ҫырусемпе телеграммӑсем илет, вӑл ҫырусемпе телеграммӑсенче вӗсне ҫитийех, йунлӑ фашисӑма татӑклӑн ҫӗнтеречченех кӗрешме ыйтаҫҫӗ.

Мӗн пур ҫынсене тата материаллӑ ресурсӑсене мобилизацилеме кирли ҫинчен, „пиллӗкӗмӗш колоннӑпа" кӗрешессине вӑйлатасси ҫинчен, ҫак вӑрҫӑра Испанине ҫӗнтерсе тӑкмала тӑвас шухӑш кирек мӗнле палӑрнисене те касса татасси ҫинчен пӗтӗм ҫар чаҫӗсенче, мӗн пур хапрӑксемпе савӑтсенче резольуцисем йышӑнаҫҫӗ.

— Кайала чакассине" халех чарсалартас пулать, урӑх пӗр пусӑм та кайала чакмала мар, — тесе ҫырать чи малла ҫар-политикӑлла работниксенчен пӗри, пиллӗкӗмӗш полк комиссарӗ пулнӑ Карлос Контрерас. — Хирӗҫ тӑрассине организацилеме, тӑшмана тытса чармала тата наступленине куҫма ҫав вӑхӑтрах вӑйсем пухса хатӗрлеме — ҫавӑн пек пайан кунхи задачӑ, — тесе ҫырать Карлос Контрерас.

Фронтри байецсен вӗҫне ҫитийех кӗрешес ирӗк-кӑмӑлне никам та хавшатма пултараймаст. Интервентсен ҫарӗ темиҫе хут лайӑхрах хӗҫпӑшалланнине пӑхмасӑрах, республикӑ чаҫӗсем тӑшмана хирӗҫ хайаррӑн тӑраҫҫӗ.

Республикӑ ҫарӗсен тӗлӗнмеле паттӑрлӑхне тата хӑйсене хӑйсем хӗрхенмесӗр хӑйуллӑн ҫапӑҫнине кӑтартакан тӗслӗхсене пит нумай илсе пама пулать. Динамитчиксем, танксене стройран кӑларас тесе, тӳрех танксем ҫине ыткӑнаҫҫӗ, бойецсем час-часах танксене окопсем патнех йараҫҫӗ, танксем окопсем урлӑ каҫса кайнӑ чухне, вӗсем ҫине айалтан гранатӑсемпе переҫҫӗ.

Акӑ политикӑлла комиссарсен паттӑрлӑхне кӑтартакан пит нумай тӗслӗхсенчен пӗри. Ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра фашиссен пульььи батальйон комиссарне Емилио Синтеса амантнӑ. Санитарсем ӑна носилкӑпа госпитале ҫӗклесе кайасшӑн пулнӑ. Анчах та йун йухтаракан Синтес бойецсем тепӗр хут вӑй хурса ҫине тӑрсанах позицине сыхласа хӑварма пултарассине курнӑ. Вӑл ура ҫине тӑнӑ та — „малала, йулташсем!" тесе кӑшкӑрса, тапӑнса пыракан фашиссем ҫине ыткӑннӑ. Вӑл танк айнех пулнӑ самантра ҫакӑн пек кӑшкӑрма вӑй тупнӑ: „Кайала пӗр утӑм та ан чакӑр, хамӑрӑн ҫӗршӗн, никама та пӑхӑнса тӑрас марришӗн, малала!.."

Вӑл малала каласма пултарайман, ӑна таптаса вӗлернӗ.

Фашисӑма хирӗҫ кӗрешекен снайперсем паттӑрӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӗсем фашиссем пулеметсенчен пенине тата бомбӑсем пӑрахнине пӑхмасӑрах фашиссен самольочӗсене персе антараҫҫӗ. Нумайах пулмаст пӗр бойец самольота персе антарнӑ ҫеҫ те мар, тата ҫав самольот ҫинчи пилӗк льотчик тарма хӑтлансан, вӗсене хӑваласа ҫитсе тытнӑ илнӗ.

Бойецсем фронтра чӑн-чӑн паттӑрлӑх тата хӑйсен халӑхне вӗҫӗмсӗр йуратса тӑнин страницисене ҫыраҫҫӗ.

— Испани правительстви пӑлхавҫӑсем илнӗ хӗҫпӑшалсенчен ҫуррине те пулин илме пултарнӑ пулсан, — тесе ҫырать Англин „Дейли Експресс" хаҫачӗ, — вӑрҫӑ тӳрех тепӗр майлӑ ҫаврӑнса каймала.

Испанин паттӑр халӑхӗ тӑшмана ҫӗнтерес ирӗкпе ҫак хӑрушӑ кунсенче хавхаланнӑ пек нихӑҫан та хавхаланман. Ҫамрӑксен дивизисене кайакан добровольецсене пухасси пӗтӗм ҫӗршывӗпе массӑлӑн пулса пырать. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах хӑйсен ирӗкӗпе ҫар чаҫӗсене тата фортификацилӗ ӗҫсем тӑвакан батальйонсене кайакан рабочисене мобилизацилесси те пулса пырать. Рабочисене мобилизацилессине профсойузсен икӗ центрӗ йенӗпе те — Рабочисен Пӗтӗмӗшлӗ Сойузӗ тата Ӗҫлевӗн анархисла Нациллӗ Конфедерацин центрӗ йенӗпе те туса ирттереҫҫӗ. Профсойузсен ҫак икӗ организацийӗ халь кӑна пӗрле ӗҫлеме тытӑннӑ. Ҫӗршывра пысӑк пуҫарулӑх паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫамрӑксен дивизисене хӑйсен ирӗкӗпе кайакансене ҫыракан пунктсене ҫамрӑксемпе пӗрле хӗрсем те вӗҫӗмсӗр нумай пыраҫҫӗ.

Испани халӑхӗн арӑмӗсемпе хӗрӗсем, арҫынсем фронта кайнипе производствӑри ӗҫ чарӑнса ларма ан пултӑр тесе, хапрӑксене, савӑтсене, чукунҫулсене тата ыттисене те 150 пин работница тӑратма обиазательствӑ илнӗ. Госпитальсенче сывалнӑ бойецсем хӑйсене часрах унтан кӑларма ыйтаҫҫӗ, вӗсем позицисене кайса каллех хӑйсен малтанхи вырӑнӗсене йышӑнасшӑн. Хӑйсен сывлӑхӗ йенчен позицисене кайма пултарайманнисем хапрӑксемпе савӑтсене кайса ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем унта рабочисене хавхалантараҫҫӗ, вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӑвакан производствӑра ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме ыйтаҫҫӗ.

Ҫак кунсенчех вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӑвакан пысӑк савӑтсенчен пӗрне Интернационаллӑ бригадӑран вӑрҫӑра аманнӑ бойецсен делегацийӗ пынӑ. Делегатсем хушшинче пӗр негр пулнӑ.

— Епӗ, пуринчен те ытла, сире ӗҫӗн паттӑрлӑхне тума чӗнме пултаратӑп, мӗншӗн тесен вӑл сире асаплӑхран ҫӑлать. Епӗр, негрсем, асаплӑх мӗн иккенне пӗлетпӗр. Епӗ кунта — Испанине — фашисӑма хирӗҫ, асаплӑха хирӗҫ кӗрешес тесе килтӗм те ӗнтӗ. Урӑх нимӗншӗн те мар, ҫавӑншӑн кӑна.

Ҫара вальььи хӗҫпӑшал кирлӗ, ӑна хӗҫпӑшалсемпе снарйадсене ытларах парӑр, вӑл вара ирӗклӗхе тата Испани никама пӑхӑнса тӑрас ҫуккине ҫӗнсе илме пултарать.

Ҫак делегаци пырса кайнӑ хыҫҫӑн савӑтри рабочисем ӗҫ тухӑҫлӑхне татах та ӳстерме хӑйсем ҫине обиазательствӑ илнӗ.

Испани халӑхӗ пӗр хастарлӑхпа ҫӗкленнӗ. Ҫӗршыв фашисла интервентсене отпор пама мобилизациленет.

Испанин мухтавлӑ та паттӑр компартийӗ, ытти чухнехи пекех, малта йертсе пырать, вӑл халӑха кӗрешӗве чӗнет. Компарти фронта хӑйӗн чи лайӑх кадрӗсене ҫӗнӗрен парать. Хӑйӗн примерӗпе, хӑйне пӗр шеллемесӗр ӗҫленипе халӑха хавхалантарать.

Паттӑр Испани халӑхӗн творчествӑлла хӑвачӗ ҫӑлкуҫ пек тапса тӑрать. Унӑн ҫӗнтерес ирӗкӗ никам хавшатайми вӑй пулса тӑрать. Ҫӗршыв хӑрушлӑхра, анчах та йунлӑ фашиссемпе вӗсене витсе тӑракансем ҫӗнтеретпӗр тесе ахалех ӗмленеҫҫӗ.

„Хӑйсене лайӑх пултӑр тесе пӗтӗм тӗнчери правӑна пӑсакансем, Испанине ирӗксӗрлекенсем, Испани халӑхӗ парӑнӗ тесе никам та ан шутлатӑр", — тесе пӗлтернӗ йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Альварес дел Вайо.

Мадрида паттӑрла сыхлани, Гвадалахарӑ патӗнче Итали дивизисене ҫӗмӗрсе аркатса тӑкни Испани халӑхӗ хӑй никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн хӑйне пӗр шеллемесӗр, паттӑрӑн кӗрешме пултарнине кӑтартса пачӗҫ. Интервентсене отпор пама пӗтӗм халӑх мобилизациленет. Фашиссене чӑмахак та тивӗҫлӗ отпор парӗҫ.

Республикӑлла Испанири художниксем халӑх фрончӗшӗн агитацилекен, фашисла интервентсене хирӗҫ, вӗсене пулӑшакансене хирӗҫ кӗрешме чӗнекен плакатсем ӳкереҫҫӗ.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Плакат — „Тӗп пултӑр фашисӑм!"
(Сойузфото).

1938 çулта çĕрулми тухăçне ӳстермели ĕççем çинчен

ЧĂВАШ АССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ ЙЫШĂННĂ ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулта çĕрулми тухăçне ӳстермели ĕççем çинчен" 1938 çулти мартăн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленинче çĕрĕç оргăнĕсем çĕрулми тĕлĕшĕнче пит çителĕксĕр ĕçленине, вырăнсенчи совет тата парти организацийĕсем çав культурă çине çителĕксĕр çаврăнса пăхнине катăртса пачĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çĕрĕç оргăнĕсен, вырăнти совет тата парти организацийĕсен ĕçĕсене çавăн пек хак пани пирĕн республикăна та пĕтĕмпех тивет.

Республика тăрăх çĕрулми тухăçĕн вăтам хисепĕ хаљ те пит пĕчĕккĕ-ха (гектартан 80—85 центнĕр).

1937 çулта хăшпĕр колхозсем çĕрулми лартнă вырăнтан пит сахал тухăç илнĕ. Канаш районĕнчи „Производитель" колхоз (председателĕ Захарăв йулташ) гектартан 30-шар центнĕр, Кувакинă районĕнчи „Хĕрлĕ Октабĕр" колхоз гектартан 57-шер центнĕр çĕрулми илнĕ.

Çĕрулми тухăçне çавăн пек сахал илекен колхозсем сахал мар, тесе шутлат Халăх Комиссарĕсен Совечĕ. Çав колхозсем сахал тухăç илни агротехникăлă ĕçсене пурнăçа кĕртме тăрăшман пирки тата районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе МТС-сен агрономĕсем хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипе туса пыман пирки пулнă.

Çĕрулми вăл, йалхуçалăхĕнчи ытти тĕрлĕ культурăсемпе танлаштарсан, питех пăхмасан та ӳсет, ытла пит тăрăшмасăрах çĕрулми тухăçне ӳстерме пулат тесе шутласа, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, çĕрĕç пайĕсемпе машинă-трактăрла станцисем çĕрулми тĕлĕшпе, унăн тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе тата чи аван сортлă çĕрулмисене колхозсенче сарас тĕлĕшпе ĕçлемен.

Чи аван ĕçлекен колхозсем тата çĕрулми лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсем çинчен, тĕслĕхрен Вăрмар районĕнчи гектаатан вăтам шутпа 256-шар центнĕр „Майак" колхоз тата çав колхозри Иетрйаковский йулташăн гектартан 580 центнĕр çĕрулми илнĕ звени çинчен Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ республикăри колхозниксем хушшинче çителĕклĕ ăнлантарса паман.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 ç. мартăн 19-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла **йышăнат:**

1. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне тата райĕçтăвкомсене республика тăрăх 1938 çулта 54.500 гектар, вăл шутран 24.600 гектар колхозсенче çĕрулми лартма панă государствă планне тултарма хушас (районсем тăрăх валеçсе пани хушса çырнинче № 1).

2. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕçтăвкомсене тата çпирт савăчĕсемпе крахмал-паткă савăчĕсен директăрĕсене çпирт-ерех тата крахмал-паткă савăчĕсем çывăхĕнчи колхозсенче çакăн чухлĕ лаптăк çинче „Вољтман" сортлă çĕрулми лартассине пурнăçа кĕртме хушас:

1. Иетĕрне çпирт савăчĕ ваљљи 1300 гектар,
2. Сĕнтĕрвăрринчи савăт ваљљи 1700 гектар,
3. Вăрмарти крахмал-паткă савăчĕ ваљљи 600 гектар,
4. Йелчĕкри савăт ваљљи 500 гектар,
5. Йĕпреçри савăт ваљљи 300 гектар,
6. Турханти савăт ваљљи 300 гектар,
7. Тракри савăт ваљљи 300 гектар.

Çпирт савăчĕсен çывăхĕнчи колхозсенче çавăн чухлĕ лаптăк çине çĕрулми лартма Иетĕрнери çпирт савăтĕнчен 400 тоннă, Сĕнтĕрвăрринчи савăтран 200 тоннă „Вољтман" сортлă çĕрулми вăрлăхне колхозсенчи сортлă маррипе улăштарма парас.

3. Пĕтĕм лаптăк çине хавăртрах сортлă çĕрулми лартмала тăвас шутпа тата 1938 çулта сортлă çĕрулми лартмали плана тултарас тĕлĕшпе, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райçĕрĕç пайĕсене, МТС-сене тата колхоз правленийĕсене çаксене туса ирттерме хушас:

а) вырăнсенче пур çакăн пек сортлă çĕрулмисене: „Ранняя роза", „Лорх", „Эпикур" тата „Вољтман", — май пур таран вăрлăх ваљљи хăварса усă курмала;

б) хушса çырни № 2 тăрăх районсенче сурккупе сортлă çĕрулми вăрлăхĕсене колхозсем хушшинче улăштарассине тата сутăн илсе лартмала тăвассине организацилемеле. Çав ĕçсене 1938 çулхи майăн 1-мĕшне туса çитермеле;

в) сортлă çĕрулми вăрлăхне улăштарнă тата сутăн илнĕ хыççăн та çитеймесен, колхозсенче вăрлăх ваљљи хăварнă çĕрулми фондĕнчен сортлисене суйласа илсе лартмала;

г) кашни колхозрах çĕрулми лартмали лаптăкран 12—14 процент вăрлăх участкисем хăвармала, çав участкăсем çине лартма лайăх пахалăхлă сортлă вăрлăх хатĕрлесе хумала.

4. Малта пыракан колхозсенчи опытсене шута илсе, çĕрулми тухăçне вăйлатас тĕлĕшпе Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райçĕрĕç пайĕсене, МТС-сене тата колхоз правленийĕсене çаксене тума хушас:

а) пĕтĕмпе 5 пин гектар йаровизацилесе акмали плана тултармала (хушса çырни № 3);

б) çĕрулмине вăл килĕштерекен уп умĕнхи тырпулсем хыççăн лартмала. Çавăн пек вырăнсем çаксем пулаççĕ: кĕрхи тырăсем хыççăн, пăрçалă тырăсем хыççăн. Лартма ваннан, чирлĕ мар çĕрулмисене тĕплĕн суйласа илмеле, кĕске срукра лартса пĕтерсе калчасем тухсан обйазательнă сӳремеле тата çу касиччен виç-тăват хутран кайа мар сумкурăпа тасатса йăран хушшисене кăпашкалатса тата купаласа тухмала;

в) тăпра мĕнлине кура çĕрулми лартмали вырăна гектар çине 30—40 тоннăран кайа мар тислĕк тата органикăлă ытти йапаласем кăларса сĕмçетмеле, çавăн пекех тата хăйсен норми тăрăх минераллă ăнăхсене сапса тухмала;

г) çĕрулмисене кăларнă чух тăкаксемпе кĕрешес тĕлĕшпе çĕрулми кăларнă хыççăн обйазательнă сӳресе пĕтĕм участăкăна сухаласа тухмала.

5. Уйхир бригадисенче, вĕсен çĕрулми те лартмала пулсан, çĕрулми тĕлĕшпе ĕçлекен йаланлăх звеносем организацилемеле. Çав звеносем çумне çĕрулми участкине, кирлĕ ĕçхатĕрĕсене тата турттăм вăйне пĕтĕм ĕç пĕтиччченех - çирĕплетсе памала. Çĕрулми лартса тăвас ĕçре ĕçлекен звено плана катăртса паниччен ытларах илнĕ кашни тоннă çĕрулмишĕн 5—6 ĕçкунĕ хушса памала тăвас.

6. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе МТС-сен çĕрулми лартса тăвас ĕçре ĕçлемели МТС-сенчи тата йулхуçалăх снабженийĕн склачĕсенчи машинăсемпе туллин усă курса çĕрулми лартса тăвас ĕçе механизацилемели плана тултарма хушас.

7. Районсенчи çĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене, МТС тата çпирт, крахмал тăвакан савăтсен директăрĕсене районсенче апрељ уйăхĕнче виçĕ кунлăх курссем организацилесе кашни уйхир бригади ваљљи пĕрер звеновод вĕрентсе кăларма хушас.

8. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕçтăвкомсене тата МТС-сене апрелĕн 20-мĕшне çитиччен кашни район тата колхоз ваљљи çĕрулми тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе тумали практикăлă ĕçсене пăхса туxса кăтартса пама, çав ĕççем çинчен колхозниксен пухăвĕсенче агрономпа пĕрле сӳтсе-йавассине организацилеме тата пăхса тухнă ĕçсене пурне те пурнăçа кĕртмеле тума хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ **Ф. Матвейĕв.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ **Н. Жукăв.**

Шупашкар хули 1938 ç. апрелĕн 10-мĕшĕ.

Хушса çырни 1-мĕш №

Чăваш АССР районĕсем тăрăх 1938 çулта сортлă çĕрулми лартмали план

(гектарпа)

Районсен йачĕсем	Пĕтĕмпе çĕрулми лаптăкĕ	Вăл шутран: „Вољтман"	„Лорх"	„Эпикур"	„Ранняя роза"	Ыттисем
Улатăр	300	—	200	—	—	100
Елĕк	470	400	50	—	—	20
Патăрйел	760	310	400	—	50	—
Вăрнар	825	825	—			—
Йĕпреç	900	700	200			
Вăл шутран, крахмал-паткă савăчĕсем патĕнче	300	300		—		—
Ишлей	300	200	100			—
Канаш	475	100	275	80	—	20
Куславкка	1130	600	230	300	—	—
Кувакино	—	—	—	—	—	200
Хĕрлĕ Чутай	200			—		—
Сĕнтĕрвăрри	2030	1980	50	—	—	—
Вăл шутран çпирт савăчĕ патĕнче	1700	1700	—	—		
Пăрачкав	850	750	100			
Турхан	400	390	10			
Вăл шутран крахмал-паткă савăчĕ патĕнче	300	300	—			
Тутаркас	50	—	50			
Трак	540	540	—			
Вăл шутран крахмал савăчĕ патĕнче	200	200	—			
Вăрмар	1310	500	710		100	
Вăл шутран крахмал-паткă савăчĕ патĕнче	600	600				
Çĕрпӳ	1560	1450	100	—	—	—
Шупашкар	1100	300	775	—	—	25
Шăмăршă	100	—	—	—	50	50
Шăхасан	100	100	—	—	—	—
Шăнкăртам	55	50	—	—	—	5
Çĕмĕрле	200	75	—	—	—	125
Иетĕрне	2600	2400	—	—	—	200
Вăл шутран çпирт савăчĕ патĕнче	1800	1800				
Йелчĕк	1245	1245				
Вăл шутран крахмал-паткă савăчĕ патĕнче	500	500				
Тăвай	500	300	200	—	—	—
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх	18000	13215	3450	380	200	745

Хушса çырни 2-мĕш №.

Чăваш АССР районĕсем тăрăх сортлă çĕрулми вăрлăхне колхозсем хушшинче улăштармали план (тоннăпа)

Районсен йачĕсем	Пĕтĕмпе улăштармалла	Вăл шутран: „Вољтман"	„Лорх"
Улатăр	50	—	50
Елĕк	—	—	—
Патăрйел	75	—	75
Вăрнар	—	—	—
Йĕпреç	150	100	50
Ишлей	—	—	—
Канаш	150	—	150
Куславкка	400	370	—
Хĕрлĕ Чутай	—	—	—
Кувакинă	—	—	—
Сĕнтĕрвăрри	500	500	—
Пăрачкав	—	—	—
Турхан	150	150	—
Тутаркас	—	—	—
Трак	300	300	—
Вăрмар	800	400	400
Çĕрпӳ	500	500	—
Шупашкар	100	—	100
Шăмăршă	—	—	—
Шăхасан	—	—	—
Шăнкăртам	—	—	—
Çĕмĕрле	—	—	—
Йетĕрне	400	400	—
Йелчĕк	150	150	—
Тăвай	—	—	—
Пĕтĕмпе	3725	2800	825

Тата Куславкка районĕнче „Епикур" сортлă çĕрулмине 30 тоннă улăштармала.

Хушса çырни 3-мĕш №.

1938 çулта çĕрулми йаровизацилемели план (гектарпа)

Районсен йачĕсем	Йаровизацилесе акмали лаптăк	Вăл шутран ир кăларма йаровизацилемели лаптăк
Улатăр	100	70
Елĕк	300	20
Патăрйел	100	20
Вăрнар	300	30
Йĕпреç	250	20
Ишлей	50	50
Канаш	250	60
Куславкка	300	75
Хĕрлĕ Чутай	150	20
Кувакинă	70	20
Сĕнтĕрвăрри	200	40
Пăрачкав	100	20
Турхан	100	20
Тутаркас	250	50
Трак	400	50
Вăрмар	250	55
Çĕрпӳ	450	50
Шупашкар	450	75
Шăмăршă	70	20
Шăхасан	150	75
Шăнкăртам	60	20
Çĕмерле	150	60
Йелчĕк	200	30
Йетĕрне	150	20
Тăвай	100	30
Пĕтĕмпе	5000	1000

1938 çулхи çураки

Вăрлăхсене йаровизацилеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Апрелĕн 15-мĕшĕ (телефон тăрăх). Акана тухмалли кунсем çывхарса килнĕ май колхозсенче акмали вăрлăхсене йаровизацилеме тытăнчĕç. Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз апрелĕн 12-мĕшне 90 центнĕр çĕрулми вăрлăхне йаровизацилеме хучĕ.

Çавнашкалах „Х-лет Октября" колхоз 15 центнĕр çĕрулми йаровизацилеме хунă. Анчах „Хĕрлĕ Октабĕр" колхозра çĕрулмине йаровизацилес ĕçре агротехника катăртăвĕсем тăрăх ĕçлемеççĕ. Çĕрулмине йаровизациленĕ çуртра çутă çителĕксĕр, йаровизациленĕ çĕрулмине хуламăн купаласа хунă.

Молотăв йачĕпе тăракан колхозра тулă, сĕлĕ вăрлăхĕсене йаровизацилеме тытăннă. Кунта пайанхи куна 51 центнĕр тулă, 56 центнĕр сĕлĕ вăрлăхĕсене йаровизациленĕ. Колхоз акана апрелĕн 23-мĕшĕнче тухса апрелĕн 30-мĕшĕнче пĕрчĕлĕ тырăсене акса пĕтерме палартнă. Ку колхозра вăйлă тырпулшăн кĕрешекен стахановла звеносем хутшăнсах пыраççĕ. Иртнĕ çулта пĕтĕм колхозĕпе те стахановла 2 звено çеç пулнă пулсан, кăçал кашни бригатăрах 3-шер стахановла звено шутланат.

„Хĕрлĕ фронтовик" колхозри опытник Йефремăв йулташ апрелĕн 13-мĕшĕнчех кĕрхи калчасене тислĕк шĕвекĕпе апат пама тытăнчĕ. МТС вăрлăхсене вĕри шывпа чӳкеме вĕрентес тĕлĕшпе Марат, Упакасси, Клемкасси, Хырхерри колхозĕсенче кĕске срукла курс урлă 62 çын вĕрентсе кăларчĕ. Курсран вĕренсе тухнă колхозниксем хаљ вăрлăхсене йаровизацилес ĕçре ĕçлеççĕ.

Д. Михайлăв.

Ăмăртăва чăннипе сарас пулат

ИШЛЕЙ. Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланса тăрат. Вăл иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставки е хутшăнма тивĕç илчĕ.

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозпа Кăрмăшри „Осоавиахим" колхоз вăйлă тырпул туса илессишĕн социалисăмла ăмăртăва тухнă. „Осоавиахим" колхоз пур ĕççене те агроплан тăрăх туса пырат. Çуракинче мĕнле ĕç тумалине кашни колхозник пĕлсе тăрат. Халĕ кĕрхи калчасене фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕк шывĕпе шăварма хатĕрленеççĕ.

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз çуракине тухма пур йенчен те хатĕрленсе çитнĕ теме çуксă. Унăн 6 центнĕр сортлă тулă вăрлăхĕ çитмест. Сĕлĕ, урпа вăрлăхĕсене мĕнле шатнине районри вăрлăх лабораторинче тĕрĕсленĕ, кантăр, тулă, пăрçа-йасмăк, клевĕр вăрлăхĕсем мĕнле шатни паллă мар.

Икĕ колхозĕ те ăмăрту договăрне мĕнле пурнăçа кĕртнине феврал уйăхĕнче тĕрĕсленĕ. Унтанпа тĕреслӳ пулман-ха. Икĕ колхозĕ те пĕр-пĕрин патне ăмăрту договăрне тĕрĕслеме кайма тухăнса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен, икĕ колхозĕ те çуракине пур йенчен те хатĕрленсе çитменни курăнат. „Осоавиахим" колхоз лаша кӳлмели хатĕрсене йусатарса çитерейĕ. Тепĕр çитменлĕх вăл — çураки вăхăтĕнче културлă-массăлă ĕççене туса пыракансем çукки.

Социалисăмла ăмăрту Мамăш йалсоветĕнче те çителеклĕ саралса пымаст. „Коммунис" колхоз Шурча йалсоветне кĕрекен „Авангард" колхозпа ăмăрт. „Партин 17-мĕш съесĕ", Каманин, Буденнай йачĕпе тăракан колхозсем социалисăмла ăмăртса ĕçлессине хакламаççĕ. Ку колхозсем халиччченех пĕр-пĕрипе ăмăрту договăрĕсем туман.

Çакă паллах социалисăмла ăмăртăва йачĕшĕн кăна хутшăнни пулат. Социалисăмла ăмăртăва чăннипе сарса, ĕççене çентерӳллĕ тума тăрăшмала.

Шчербаков.

Мулчировани туни пире мĕн пачĕ

Мулчировани тесе тăпра çине кирек мĕнле йапала сарса тухнине калаççĕ. Ана çум курăксемпе кĕрешес тĕлĕшпе, тăпрана кăпăшка тăратас тата тăпрари нӳрĕке сыхласа тăрас шутпа сараççĕ.

Мулчировани тума йурăхлă йапаласем çаксем пулаççĕ: кивĕ улăм, пăчкă кĕрпи, çĕрсе çитнĕ вак тислĕк, çĕрĕк тăпри, торф т. ыт. те.

Çăмăр сахал çунă çулсенче тата пирĕн Чăваш республикĕнчи пек кĕллĕ тăпралă вырăнсенче мулчировани туни пит пысăк усă парат. Вăйлă çăмăрсем пулнă хыççăн кĕллĕ тăпра çийĕ пирченсе хытса ларат, кайран вăл вара часах типет. Тăпра çине кирек мĕн витнĕ пулсан, тăпра пирченмест, вăйлă çăмăр хыççăн та кăпăшка йулат. Кăпăшка тăпрара нӳрĕк те ытларах сыхланса тăрат, сывлăш та унта лайăх кĕрсе тăрат.

Мулчировани туни мĕнле усă панине çакăнтан куратпăр. Епĕр, „Смычка" колхозра, опыт тăвас шутпа тулă акнă вырăна улăм сарса мулчировани турăмăр. Сариччен малтан кивĕ улăма турттарса, тулă акнă хыççăн тепĕр куннех тăпра çине 1—2 сантиметр хуламĕш сарса тухнă. Сăнама, тесе йунашарах пĕр участкăна витмесĕрех хăварнă, участкăсем хушшинче урăх нимĕнле уйрăмлăхсем те пулман. Кĕркунне уйрăмăн çапса пăхсан тухăç мулчировани тунă вырăнта уйрăмăнах лайăхрах пулнине куртăмăр. Мулчировани тунă вырăнта мулчировани туман вырăнтинчен гектар çинче тулă тухăçĕ 4,5 центнĕр ытларах тухрĕ. Çапла вара, мулчировани тунипе тулă тухăçĕ чылайах ӳсрĕ. Анчах мулча сарса ĕçленин усси вăл тĕштырăсен тухăçĕ ӳснипе çеç пĕтмест, тата улăм тухăçлăхĕ те тырă тухăçĕне танах ӳсет. Мулчировани туни пахча-çимĕçсен тухăçне те пит нумай ӳстерет. Унсăр пуçне тата пахча-çимĕç лартнă вырăна кăпăшкалатса тăрас ĕçне пахча çимĕçсене шăварса тăрас ĕçе нумай çăмăллатат.

Йелчĕк р-чи „Смычка" колхоз председателĕ **И. А. ШЧИПЦОВ.**

М. П. СМИРНОВ
ССРС Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ

Совет суту-илӳвĕ 1938 çулта

Куллен кирлĕ йапаласем туса кăларакан промышленнăç 1937 çулта 1932 çулхинчен икĕ хут ытларах продукци туса кăларнă. Куллен кирлĕ йапаласене туса кăларасси иккĕмĕш пилĕкçуллăхра мĕн чухлĕ хушăннине çеç илсессĕн те, вăл вăрçăччченхи Российăри шултăра промышленнăç çулталăкра туса кăларнă пĕтĕм продукци хисепĕнчен иртсе кайат.

Совет суту-илӳвĕнчи — государствă, кооперации тата колхозсемпе хресченсен суту-илӳвĕнчи—вакă суту-илӳ çаврăнăçĕ иккĕмĕш пилĕкçуллăхра виçĕ хут ӳснĕ (1932 çулта 47,8 мĕлйард тенкĕ пулнă пулсан, 1937 çулта 143 мĕлйард тенке çитнĕ).

Суту-илӳ çаврăнăçĕ ӳснине куллен кирлĕ, пысăк вырăнта тăракан таварсене сутни çинчен калакан цифăрсем тата уççăнрах кăтартса параççĕ. 1933 çултан пуçласа 1937 çула çитиччен выљăхчĕрлĕх çуне сутни 3,5 хут ытла ӳснĕ, çăмарта сутасси — ултă хут ытла ӳснĕ, пулă тата çељодкăсем сутасси—1,5 хута йахăн, кăлбасси тавраш̆ĕсем сутасси — 8 хут ытла, сахăр сутасси — 3,5 хута йахăн, мамăкран тĕртсе тунă йапаласем сутасси — 1,6 хут, çăмран тĕртсе тунă пусма таварсем сутасси — 3 хут, йĕтĕнрен тĕртсе тунă таварсем сутасси— 14 хут ытла, çыхса тунă таварсем сутасси — 2,6 хут, пурçăн таварсем сутасси — 3,5 хут, сăран атă-пушмак тата сăранран тунă тĕрлĕ таварсем сутасси—2,5 хута йахăн, кĕпе супăњ сутасси — 3 хут ытла ӳснĕ т. ыт. те.

Çак çулсенче суту-илӳ магазинĕсемпе лавкисен хисепĕ чылай нумайланчĕ, чылай лайăхланчĕ.

Иулашки çулсенче мĕн пур апат-çимĕç таварĕсен хакне, нумай промышленнăç таварĕсен хакне йӳнетнĕ. Çапла туни ĕççынисене калама çук пысăк перекет пачĕ. Кунта çакна палăсан та çителĕклĕ. государствă, кооперации суту-илӳвĕнче тата колхозсемпе хресченсен суту-илӳвĕнче таварсен хакне йӳнетнине пула, Совет Союзĕнчи ĕççынисем 1935 тата 1936 çулсенче кăна 10 мĕлйард тенкĕ ытла перекетленĕ. 1937 çулта совет суту-илӳвĕн пур сыпăкĕсенче те тавар хакĕсене çавăн пекех йӳнетнĕ. Иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн пур çулĕсенче те колхоз пасарĕсенчи тавар хакĕсем пĕрмайах йӳнелсе пычĕç.

Анчах, тавар çаврăнăшĕ ӳсет пулин те тата вырăнта тăвакан апат-çимĕç продуктисемпе промышленнăç таварĕсене ĕççынисем илесси ӳссе пырат пулин те, суту-илӳ хаљ те халăх хуçалăхĕн кайа йулса пыракан участки пулса тăрат.

Государствăпа кооперации суту-илӳвĕнчи вакă суту-илӳ çаврăнăçĕн 1937 çулти планĕ—правителствă çирĕплетсе панă план—131 мĕлйард тенкĕлĕх пулнă. Çăннипе илессĕн вăл плана 125 мĕлйард тенкĕлĕх çеç тултарнă. Иртнĕ çулта халăх илмеле пулнă пĕтĕм тавартан 6 мĕлйард тенкĕлĕх тавара халăх илеймесĕр йулнă.

Суту-илӳ Халăх Комиссариатĕнче, Тĕпсойузри, вĕсен облăçсенчи сыпăкĕсенче тата суту-илӳ организацисенче хăйсен ирсĕр ĕçĕсене туса пурăннă халăх тăшманĕсем (Вейцĕр, Зеленский, Хлопљанкин, Болотин, Левенсон, Ољский т.ыт. те) халăха тарăхтарас тесе, провокацилĕ тĕллев тытса, халăха куллен кирлĕ таварсем парса тăрас ĕçре чăрмавсем туса пынă. Вĕсем тавар илекенсене тавара висçерен чакарса парассине организациленĕ, тавар илекенçене улталама тата тавар хакĕсем тĕлĕшĕнчен совет политикине пăсмали условисем туса панă. Суту-илӳре растратăсем тăвассине, саратассине ӳстерес тесе, сăтăрçăсем учотпа отчот ĕçне пăтраштарса пурăннă.

Хальхи вăхăтра суту-илӳ работникĕсен умĕнче тăракан тĕп задачă—сăтăрлă ĕçрен йулнă сийенсене часрах пĕтересси. Пĕтĕм ĕçе тавар илсе тăракан совет граждăнĕсен интересĕсемпе, вĕсем ыйтнисемпе килĕшӳлĕн сĕнетсе йĕркелесси пулса тăрат.

1938 çулта государствă тата кооперации суту-илӳвĕ хăйĕн ĕçне чылай анăçлатма тата лайăхлатма тивĕç. Государствă тата кооперации суту-илӳвĕнчи вакă суту-илӳ çаврăнăçĕ ваљљи 1938 çулшăн правителствă çирĕплетсе панă план—140,5 мĕлйард тенкĕ. Урăхла каласан, 1938 çулта халăха 1937 çулта сутнинчен 15,5 мĕлйард тенкĕлĕх нумайрах тавар сутас пулат.

Кăçал мамăкран тата çăмран тĕртсе тунă йапаласене, сăранран тата резинăран тунă атă-пушмак тавраш̆ĕсене, çĕлесе хатĕрленĕ таварĕсене, трикотаж таварĕсене, çип тавраш̆не, хуçалăхпа културăра кирлĕ тĕрлĕрен таварсене пĕлтĕрхинчен чылай нумайрах туса кăлараççĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах тата апат-çимĕç таварĕсемпе суту-илӳ тăвасси чылай пысăкланмала.

Халăх пурнăçĕ çĕкленсе кайни ĕнтĕ кăçалхи çул нумайăн туса кăларакан таварсене пĕтĕмĕшпех сутса вырнаçтарма май парат.

Правителствă 1938 çулшăн çирĕплетсе панă план—вăл чи пĕчĕк план. Ана тултарас ĕç çине механически пăхма—суту-илӳ çаврăнăçĕн пĕтĕмĕшле цифрине тултарнă пултăр! — тесе пăхма йурамаст. 1938 çулта тавар çаврăнăш планне тултарассин пахалăхĕ, ассортимент çирĕп тăрассишĕн, ассортимента анлăлатассишĕн тата лайăхлатассишĕн тăрăшасси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрат.

Халăх тăшманĕсем тавар çаврăнăшне пĕлтĕркечах тĕрĕс мар планланă, тавар фондне çапла сăтăрла йĕркепе салатса парса, пысăк вырăн йышăнса тăракан районсене начар условине лартнă, унти халăха таварсем парса тăрас ĕçе пӳлсе тăнă.

Таварсене районсем тăрăх, суту-илӳ пункчĕсем тăрăх тĕрĕс салатса парасси суту-илӳ ĕçне анăçлăн туса пыма пит кирлĕ услови пулса тăрат. Суту-илӳ органĕсем вырăнти ĕçре тĕрĕс организацилесси вăл промышленнăçра таварсем илсе тăрасси кăна мар, вăл—тавар илекенсен интересĕсемшĕн тăрăшса производствăна куллен кун çĕклентерсе пырасси пулса тăрат. Совет суту-илӳвĕ организацилĕ совет потребителĕн представителĕ пулса тăрат, çавăнпа та вăл тавар илекенсен интересĕсемшĕн тăрăшса, промышленнăçран çакна ыйтма тивĕç: таварсен пахалăхне лайăхлатма, ассортимента анлăлатма, çĕнĕ таварсем кăларма, вăл таварсене шăпах палăртса хунă срукссенче парса тăмашкăн ыйтма тивĕç.

Кăçалхи çул пуçланнăранпа виçĕ уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Суту-илӳ организацисем тавар çаврăнăш планне мĕнле тултарса пыраççĕ-ха? Халлĕхе çителĕксĕр-ха. 1938 çулăн пĕрремĕш квартăлĕнче суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн ваккăн суту-илӳ ĕçĕнчи тавар çаврăнăш планне 92,5 процент тултарнă; пĕрле апатланасси — 96 проц.

Вăрласа пĕтерни, растратăсем, тавар илекенсене улталани, тавара вицçерен каттăк пани хаљ те пур-ха.

Тавар илекенсем тĕлĕшпе културăлă пуласси çителĕклĕ мар-ха.

Çаксем пурте ĕнтĕ, суту-илӳре пулнă сăтăрлă ĕççен сийенĕсене ытла та йĕрипен пĕтерсе пыни çинчен калаççĕ. Суту-илӳре практикăлă ĕççем тăвас вырăнне, унта бољшевикла йĕрке туса хурас вырăнне пушă сăмахсем каласа, тупа туса ирттернисем час-часах пулаççĕ.

Суту-илӳ работникĕсен централизациленĕ фондсем çине кăна шанса тăмала мар, вĕсен вырăнта туса хатĕрлекен таварсене тавар çаврăнăшне анлăн кĕртес пулат.

Пурте пĕлеççĕ, çĕршывра усă курмасăр выртакан тавар запасĕсем нумай; вĕсене государствă тата кооперации суту-илӳне хутшăнтарни ваккăн суту-илӳ çаврăнăшне ӳстерме май парат. Çавăнпа та централизацилĕ мар хатĕрлевсем çине тата сутăн илсе хурасси çине кăçал уйрăмах пысăк тимлĕхпе çаврăнса пăхас пулат.

Суту-илӳ работникĕсен çакна аса тытса тăрас пулат: халăх вĕсене лайăх плансене кура мар, чăн-чăн пулса пыракан, практикăлă ĕç тăрăх хаклат. 1938 çулта çĕршыв совет суту-илӳвĕ умне пит те пысăк задачăсем лартрĕ. Вĕсене кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртесех пулат.

Суту-илӳ тăвакан пунктсен хисепне чи кĕске срукрах нумайлатас пулат, çĕнĕ магазинсем културăлă суту-илӳ ваљљи пур йенчен те лайăх пулмала. Анчах ĕç, паллах, çĕнĕ магазинсем çинче çеç мар. Тĕп задачă — пĕтĕм магазинсемпе лавкасен ĕçне лайăхлатасси.

Пирĕн çĕршывра чаплă магазинсем пур. Вăл магазинсем техника тĕлĕшĕнчен, таварсен ассортименчĕпе пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен, тавар илекенсем пирки тăрăшас тĕлĕшрен Иевропăпа Америкăри чи лайăх магазинсенчен те кайа мар. Анчах çав пек магазинсем çĕршерĕн кăна шутланаççĕ. Суту-илӳн ытти пур предприйатийĕсем те çав кăтартулă лайăх магазинсенчен ытла та йулса пыраççĕ. Кăтартулă лайăх магазинсемпе ытти нумай магазинсем хушшинчи уйрăмлăх тивĕççĕр пысăк. Магазинсен çурчĕсем кирлĕ пек лайăх пулманни, чи простой инвентарсем çителĕклĕ пулманни, тавар илекенсем тĕлĕшпе културăлă пуласси çителĕксĕрри, черетсем, таварсен ассортименчĕ çирĕп тытăнса тăманни—çаксем ĕнтĕ чылай магазинсемпе лавкасен паллă çитменлĕхĕсем пулса тăраççĕ.

Паллах, çĕршыври пур магазинсенче те Мускаври „Гастроном" № 1 магазинри пек тавар ассортименчĕ тытса тăма май çук тата ăна тумах та кирлĕ мар. Таварсен ассортименчĕ магазинсене кура пулмала. Анчах вăл ассортимент, пĕрмайах çирĕп тытăнса тăни кирлĕ, вăл тавар илекенсене вĕсем мĕн ыйтнă çавна парса тăма çителĕклĕ пулни кирлĕ.

Пĕтĕм суту-илӳ ĕçне çĕклесе йарас, суту-илӳ предприйатисен ĕçне лайăхлатас задачă суту-илӳ оргăнĕсене кăна тивмест, вăл вырăнти пур парторганизацисене, совет организацийĕсене те тивет.

Суту-илӳ ĕçĕнче пулнă сăтăрлă ĕçрен йулнă сийенсене пĕтерес ĕçре партипе совет организацийĕсен ĕçĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине Донбас тĕслĕхĕ пит лайăх кăтартса парат, унта партин облăç комитечĕпе облĕçтăвком суту-илӳ ыйтăвĕсемпе тăчăн ĕçленĕ.

„...Совет суту-илӳвĕ хамăрăн тавар, бољшевикла ĕç пулса тăрат... суту-илӳре ĕçлекенсем, вăл шутрах прилавок работникĕсем те, вĕсем тĕрĕс ĕçлессĕ пулсан пирĕн, революцилĕ, бољшевикла ĕçе туса пыракансем пулса тăраççĕ". (И. Сталин. Ленинизм ыйтăвĕсем. Стр. 575).

Суту-илӳ работникĕсен массин тĕп йышĕ, пысăк пайĕ — суту-илӳре пулнă сăтăрлă ĕçрен йулнă сийенсене хăвăртрах пĕтерме, суту-илӳ кайа йулса пынипе пĕтерме, тавар илекенсем çине културăлă пăхассине сӳлĕ пусăма çĕклесе тăрăшакан тӳрĕ кăмăллă çынсем. Анчах, суту-илӳ организацисемпе предприйатисен руководителĕсем суту-илӳри малта пыракан работникĕсене чăнласах хавхалантарас, малала çĕклентерсе пырас тĕлĕшпе тумали условисене пĕтĕмпех туман-ха.

Суту-илӳ работникĕсем нумайĕшĕ хаљ те, пирĕн ĕç — администрации йĕкĕне айăпласси, айăпа кĕнĕ работникĕсене суда парасси т. ыт., пулса тăрат, тесе шутлаççĕ. Вĕсем воспитанилĕ ĕççем тăвассине шута хумаççĕ, аçархаттару метачĕсене манса хăвараççĕ, вырăнти работникĕсене практикăлă пулăшу памаççĕ, оперативлă, куллех контроле йăлана тĕрĕслесе тăрассине начар туса пыраççĕ. Суту-илӳре чылайах пулакан растратăсемпе çаратусен тĕп сăлтавĕсенчен пĕрне—суту-илӳ кадрĕсем вĕсемсĕр улшăнса тăнине пĕтермен-ха. Лавкара тавар сутса тăракансен ĕçĕсем пирки куллен-кун, тăрăшни пулмасан, вĕсене тăтăшах пулăшу парса пымасан, лайăх ĕçе пĕрмайах хавхалантарса пыни пулмасан, суту-илӳре çирĕп тытăнса тăракан кадрсем тума май çук.

Суту-илӳ организацисенче партири тата партири мар бољшевиксен кадрĕсем нумайăн хисеплевеççĕ. Бољшевикла тĕрĕс йĕртсе пырсан вăл кадрсем суту-илӳ ве халăх хуçалăхĕн малта пыракан позицийĕсем çине илсе тухма пултарĕç та ...

Пушар охрани 20 çул тултарчĕ

Çирĕм çул каялла, 1918 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче, Владимир Ильич Ленин Вут-кăварпа кĕрешес тĕлĕшпе государствăлă ĕçсем организацилесси çинчен" декрет алă пусса каларĕ. Çак кун хыççăн совет çĕршывĕнчи пушар охранин мухтавлă историйĕ пуçланса кайăт.

Патша Российĕнчи халăх çурри ытла хăйĕн витнĕ пуртсенче пурăннă. Тĕпĕ-йĕрĕпе çунтарса яракан пушарсем халăхăн чăн-чăн инкекĕ пулнă. Вырăс ялĕсем кашни 20—25 çулта çунса кайнă, Вут-кăвар хуттăрсене, ялсене, посолкăсене, кварталсене тата хуласене те пĕтерсе хунă. Октябрь революцийĕчен кăшт малтан çеç Полоцк тата Барнаул хулисем йăлтах тенĕ пек çунса кайнă. Пушарсем çирĕк çулсерен 500 мĕлйун тенкĕ (ылттăн укçа шучĕпе) сийен кунă. Россия çулĕсем тăрăх вуншар пин çунса кайнă ялсем ылтăкаласа çÿренĕ.

Октябрьти Социализмла революци хыççăн пушар охранине тĕрекле тĕлĕшпе ĕçе тÿрех сарса яма май килмен. Çамрăк республикăн пĕтĕм вăйне шуругвардейсене тата ют çĕршыв интервенчĕсене хирĕç кĕрешме яна. Халăх тăшманĕсем вут тĕрте-тĕрте çунтарнă, ку вăл совет влаçне кĕрешмели чи усал меслеченчен пĕри пулнă. Хапрăксене савăтсене тата шахтăсене тăшманла диверсисенчен сыхласси хайар клас кĕрешĕвĕн участкисенчен пĕри пулнă.

Граждан вăрçи пĕтнĕ хыççăн пушар охранин организацине йăлтах çĕнĕрен тума тивнĕ. Ялсенче вуншар пин ирĕклĕ дружинăсем тунă. Пушар командисене техникăпа хĕçпăшаллантарасси пысăккăн ÿсрĕ. Пушар сарайĕсене тăракан начар лашасем, алăпа уçламалли насуссем тата Россияри паллă каланчасем вырăнне пит паха автомашинăсем, мотопомпăсем, електросигнализаци туса панă.

Пăлта коллективизаци тунă хыççăн тата 1934 çулхи июлĕ уйăхĕнче хуласенчи пушар охранине йĕртсе пырас ĕçе СССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ аллине панă хыççăн пушарсемпе кĕрешес ĕçре тата пысăкрах çитĕнÿсем тунă.

1937 çулта, 1936 çулпа танлаштарсан, пушарсенчен сийен курни Свердловск облаçĕнче 34,6 процент, Челябинск облаçĕнче 34,2 процент чакнă. Ленинградра пушарсенчен 1935 çулта 1.006 пин тенкĕ, 1936 çулта—906 пин тенкĕ, 1937 çулта 671 пин тенкĕ сийен курнă, çав вăхăтрах революцийĕчченхи Петербургра пушарсенчен кашни çулах 3 мĕлйун тенкĕ ытла (ылттăн укçа шучĕпе) сийен курнă пулнă.

Пирĕн пысăк хăвăртлăхсемпе ÿссе пыракан социализмлă çĕршывра пушарсенчен сийен курни пĕтĕм сумми чухăн Патша Российĕнчинчен темиçе хут пĕчĕкрех.

Совет пушар охрани çак çитĕнÿсене коммунисла партипе Совет правительстви йĕртсе пынипе, сталинла Халăх Комиссарĕ Ежов юлташ йĕртсе пынипе тунă. Ежов юлташ пушар охранин работникĕсене большевикла сыхлăхлă пулма, шиклĕр те хăюллă пулма вĕрентсе пырат.

Вут-кăварпа активлăн кĕрешнĕшĕн Мускаври, Краснодарти, Борисоглебскри пушар командисене ССР Союзĕн орденĕсемпе наградăланă. Пушар охранин пулмалĕш, бойецĕсемпе командирĕсене те çавăн пекех ССР Союзĕн орденĕсемпе наградăланă.

Совет пушар охрани 20 çул тултарнă ята ĕçлекен работниксен кĕрешÿпе политикăлă хатĕрлĕхне тата революцилле сыхлăхне малашне те ÿстерес, ăна малашне те Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ тавра пĕтĕçтерес паллăпа ирттерет.

(ТАСС).

Социализмла харпăрлăх—совет йĕркин чи таса, никам тĕкĕнмеле мар никĕсĕ

Сталинла Конституци социализмла харпăрлăха сыхлас ĕçе пиххăçанхинчен çÿлĕ вырăна хăпартрĕ. Конституцин 131 статйинче çапла каланă: „ССР Союзĕн кашни гражданинĕ общественнăлă, социализмлă харпăрлăха, совет йĕркин чи таса, никам тĕкĕнмеле мар никĕсĕ, хамăрăн тăван çĕршыв пуянлăхĕпе хăвачĕн çăлкуçĕ, мĕн пур ĕççыннисен пуян та культурлă пурнăçĕн çăлкуçĕ пулса тăракан харпăрлăха,—упраса, çирĕплетсе пыма тивĕç. Общественнăлă, социализмлă харпăрлăха тĕкĕнекен çынсем халăх тăшманĕсем пулса тăраççĕ".

Социализмла харпăрлăха упраса, çирĕплетсе пырас ĕçре пушар охрани пысăк вырăн йышăнса тăрат. Унăн тĕп задачийĕ—халăх хуçалăхне пушарсенчен сыхласси. Ку ĕç пире пысăк сийенсенчен çăлănса юлма пулăшат. Пушар пулсан ăна сÿнтерме йăвăр тата пысăк сийен пулат, çавăнпа пушартан сыхланасси тĕп вырăнта шулмала.

Чăваш республикинче пушарсен шучĕ çултан çул чакса пырат, апла пулин те, енĕр лăпланса ларма пултараймастпăр, сыхланас ĕçе татах та вăйлатмала.

Анчах хăшпĕр предприятисен руководителĕсем час-часах пушартан сыхланас йĕркесене пăхăнмаççĕ. Сăмахран, Авторемонт ертел правленийĕн председателĕ Зонтикăв, Автогужтрест гаражĕн начальникĕ Туманăв юлташсем çултан çул государствăн пушар надзорĕ ыйтнисене пурнăçламаççĕ, çавăнпа та çак предприятисене хупас ыйту тăрат. Канашри сĕтелпукан тăвакан хапрăкра та çавнашкал йĕркесĕрлĕхсем пулнă, хапрăка хупса лартас тесен тин вĕсем пушартан сыхланас йĕркесене пурнăçларĕç. Кашни предприяти руководителĕн пушартан сыхланас ĕçе лайăхлатмала. Социализмла харпăрлăха сыхлас ĕçе пушар охранисĕр пуçне пирĕн çĕршывăн ĕççыннисем пурте активлăн хутшăнаççĕ. Предприятисенче, колхозсенче пушарпа кĕрешес ĕçе пулăшакан ирĕклĕ ушкăнсем (ДПП) организациленеççĕ. Ку ушкăнсен задачийĕ хайсен предприятийĕсене, колхозсене пушартан сыхласси тата пушар тухсан ăна сÿнтерме пулăшасси пулса тăрат.

Анчах пушар охранин хăшпĕр начальникĕсем çак ирĕклĕ ушкăнсене çителĕклĕн пулăшса пымаççĕ-ха, çавăнпа та нумайĕшĕ хут çинче çеç шутланса тăраççĕха.

Пушар охрани XX çул тултарнине паллă туса, революцилле сыхлăха, ĕçĕн пахалăхне ÿстермеле. Чăваш республикинче пушарсенчен сийен курассине пĕтермеле.

Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн пушар охрани пайĕн инспекторĕ **КОЗЛОВ.**

Сыхă тăратпăр

ÇĔРПУ. Чирич-касси „Малалла" колхозра пушартан сыхланас ĕç чылай вăйланчĕ. Ирĕклĕ дружина начальникĕ Кирил Матвейĕв колхозниксене пушартан сыхланас йĕрке çинчен ăнлантарат. Çак кунсенче вăл колхозниксен пухăвĕнче ССР Союзĕнче пушарпа кĕрешес ĕç çинчен В. И. Ленин ал пусса декрет каларни 20 çул тултарни çинчен доклад туса пачĕ.

Кун хыççăнах дружина членĕсем ялти пушарпа кĕрешес ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухрĕç.

Ф. Филиппăв.

Команда ÿсĕмĕ

Шупашкарти пушарпа кĕрешекен команда 1918 çулта организациленнĕ.

Команда çулсеренех ÿссе пынă. 1930 çулта командăра командирсемпе бойецсем 32 çын пулнă, хатĕрсем те чылайах нумайланнă. Халĕ командăра командирсемпе бойецсен йышĕ 102 çын, катка-пичкесемпе пушар сÿнтерме кирлĕ ытти хатĕрсем виçĕ хут ытла ÿснĕ.

Командирсемпе бойецсем хăйсен политикăлă пĕлĕвĕсене хăпартас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ.

Команда пушарпа кĕрешес тĕлĕшпе хулара чылай пысăк ĕçсем тунă. 1938 çулта хулари государствă учрежденисен çурчĕсене тата пурăнакан кил-çуртсене виçĕ хут тĕрĕслесе тухнă. Пушартан сыхланасси çинчен кăтартусем панă.

Арк. Неçтерăв.

Мускаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан „Шарикоподшипник" 1-мĕш № савăчĕн техникĕ И. М. Заводский юлташ штамповкă ĕçне тумали çĕнĕ май сĕннĕ. Унăн сĕнĕвĕ ĕç тухăçлăхне 13 хут ÿстерет. И. М. Заводский юлташа çавăншăн премие 5.000 тенкĕ тата çĕнĕ хватер панă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. М. Заводский хăйĕн штампĕ çинче ĕçлет.

Д. ФАВИЛАВИЧ фотоÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Оборонă значокĕсем илеççĕ

Йелчĕкри (Йелчĕк р.) вăтам шкулта оборона кружокĕсем аван ĕçлеççĕ. Кĕркуннерепе ЮВС значокăн нормине 27 ача, ЮПВХО значокĕн нормине 17 ача, ПВХО значокĕн нормине 49 ача тата БГТО-па ГТО значокĕсен нормисене 59 ача пачĕç. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне кашни ача 4 оборона значокĕ илессишĕн тăрăшат.

М. Иванов.

1 Май уявне хатĕрленнĕ май, Шупашкарта килхуçи хĕрарăмсем хушшинче ГСО значокĕн нормине парасси анлăн саралчĕ. Çак кунсенче Кадыков урамĕнче пурăнакан килхуçи хĕрарăмсенчен 12 çын нормăсем парса значоксем илчĕç.

Çавăн пекех Карл Маркс урамĕнче пурăнакан килхуçи хĕрарăмсем те ГСО кружокĕнче вĕренеççĕ. Кружокра пурĕ 28 хĕрарăм. Вĕсене Лазăрĕвă врач вĕрентет. Вĕсем майăн 1-мĕш тĕлне нормăсем парса значоксем илме хатĕрленеççĕ.

Мих. Йакăвлĕв.

Çĕнтерÿлĕ Хĕрлĕ çар

Мартăн 14-мĕшĕнче Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи чикки урлă урăхçĕршыв салтакĕсем каçса, шалалла кĕрсе пынă. Совет пограничникĕсене пăшалпа, пулеметпа пенĕ. Пирĕн пограничниксем чĕлеклеçекен Совет çĕршывне сĕмсĕрленсе кĕрекен бандитсене хирĕç тăнă. Кĕрешÿ хĕрÿлĕ пулнă. Тăван çĕршывшăн пуçне те хума хатĕр пограничниксем, хăйсем иккĕн çеç пулнă пулсан та, 15 çынлă бандăна çĕмĕрсе тăкнă.

(„Правда" хаçатран).

Сана епĕр тавтăватпăр,
Çĕнтерÿлĕ Хĕрлĕ çар.
Уйаври пек савăнатпăр
Сан паттăрлăха курса.
Санăн вăй-хала мухтатпăр,
Санăн ятпала юрлатпăр
Çĕнĕ юрă шăратса.

Питĕ çирĕп ес сыхлатăн
Пирĕн савнă çĕршыва.
Хĕрлĕ çарăм, çавăнпа та
Халăх сана пит сават.

Есĕ пирĕн чыслă паттăр,
Никам çĕнейми хăватлă,
Тивĕç пирĕн мухтава.

Çиллĕ-тăвăллă кунçулăн
Вутĕнче çуралтăн ес.
Йурататчĕ сана Ленин,
Сана панă вăл вăйне,
Йуратат сана хаљ Сталин,—
Ленин—Сталинăн вăй-халĕ
Çĕмрĕ пур тăшмансене.

Н. Шелепи.

Почтă уйрăмĕн ĕçне лайăхлатмала

Кĕçĕн Кипекри (Вăрнар р.) почтă уйрăмĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен районра тухакан „Социализм çулĕпе" хаçатра темиçе хут та пичетленĕ. Анчах почтă уйрăмĕ вăл çитменлĕхсене пĕтерни курăнмаст-ха. Çырăннă хаçат-журналсене подписчиксем вăхăтра илеймеççĕ.

Акă, Зйабликăв колхозник йанвар уйăхĕнче „Пчеловодство" журнал çырăннă пулнă. Ăна вăл журнала ку тарана çитсе пĕр номĕр те паман. Йалсовет председателне Çергейĕв йулташа март уйăхĕнче „Правда" хаçата 5 номĕр памасăр хăварнă. Çырăнна хаçат-журналсене подписчиксем вăхăтра илсе тăманни çинчен почтă уйрăмне пĕлтерсен, почтă уйрăмĕн пуçлăхĕ Матвейĕв йулташ хăтăрса кăна тăкат.

Хаçат-журнал сарас ыйтупа почтальонсене пухса канашлусем ирттермеççĕ. Çакăн пек ĕçленипе те ĕнтĕ почтă уйрăмĕ хаçат-журнал сарас плана нихăш квартăлта та тултарса пыраймаç. Почтă уйрăмне кĕрекен йалсенчи 700 хуçалăхран 270 хуçалăхĕ çеç хаçат-журналсем çырăнса илнĕ.

Почтă уйрăмĕн ĕçне халех лайăхлатас пулат.

В. Иванов.

Вăрман йухтаракан участкăсенче

Сулăсем тăвассине хăвăртлатмала

(Чăвашвăрманпром сводки тăрăх)

Бездна тата Љуља шывĕсем тăрăх вăрман йухтарасси халĕ те йапăх пырат.

Љуља шывĕ тăрăх пĕтĕмпе 10 пин фесметр йăвăç йухтармала пулсан, апрелĕн 15-мĕшне пĕтĕмпе те 830 фесметр çеç шыва йанă. Ку таранччен ĕçе пăрсем капланса тăни чăрмантарнă. Халĕ ĕнтĕ пăрсем тасалсах пыраççĕ. Çавăнпа та шыв тулнă вăхăтра йăвăçсене йухтарса пĕтерессишĕн тăрăшмала. Анчах кунти руководителсем ĕçе васкамасăр туса пыни курăнат.

Хура Бездна шывĕ çинче ĕçсем лайăхланни сисĕнет. Кунта йухтармали йăвăçсене пĕтĕмпех шыва йанă тата 12 пин фесметр йăвăçсене Шура Бездна шывĕ çине каларнă. Халĕ ĕнтĕ Шура Бездна шывĕпе 61 пин фесметр тĕп гавăне йухса пынă. Анчах йăвăçсене савăтсене çитерсе пырасси хуллен пырат-ха.

Йăвăçсене сулăсем туса йухтарма хатĕрленесси сÿрĕк пырат. Сулăсем туса ку таранччен 500 фесметр çеç сыхнă. Сулă сыхнă йăвăçсенчен 420 фесметрне çеç шыва йанă. Ку йенĕпе ĕçе халех хăвăртлатмала. Шывсем тулнă вăхăтра сулă туса йухтармали йăвăçсене те пĕтĕмпех вырăнсене çитерессишĕн кĕрешмеле.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкă

П. йалкор Кÿстерехри (Ишлей р.) Йакушкин Иван йал хушшинче хулиганла ĕçсем туса пурăнни, йалти çынсене нимĕн айăпсăрах хĕнесе çÿрени çинчен çырнăччĕ.

Ку заметкăна тĕрĕслеме Ишлей районĕнчи милици тытăмне йанăччĕ. Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Йакушкин Ивана УК 74-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă.

Судаков йулташ çинчен хаçатра йăнăш çырнă

1938-мĕш çулти йанвар уйăхĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн 11(4824) номĕрĕнче Судаков йулташ çинчен С. Минейĕв йулташ статйи пичетленсе тухнă. Кунсăр пуçне Госпланра ĕçлекен Филиппăв йулташ парти Чăваш Обкомĕ çумĕнчи парти комитетне Судаков йулташа айăплама тесе материалсем тăратнă.

Судаков йулташ çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçатра çырнă статйана тата Госпланра ĕçлекен Филиппăв йулташ панă материалсене тĕрĕсленĕ хыççăн, апрелĕн 7-мĕшĕнче Судаков йулташ ыйтуне парти организацин пухăвĕнче сÿтсе йавнă. Парти пухăвĕ Судаков йулташ çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçатра çырнă фактсем тĕрĕс маррине кăтартнă. Çакăн пекех, Госпланра ĕçлекен Филиппăв йулташ Судаков çинчен елеклекен материалсем тăратни çинчен Госплан çумĕнчи пуçламĕш парторганизацине пĕлтернĕ.

Суту-илÿ хыпарĕсем

Çуркуннепе çуллахи вăхăтра Чăвашторг тĕрлĕрен фруктăсем, сăра, кăвассем, тутлă шывсем сутма 52 вырăнта киоскăсемпе палаткăсем уçат.

Çураки вăхăтĕнче колхозниксене кирлĕ таварсене вăхăтра, кÿрсе çитерес майпа Чăвашторг куçса çÿрекен лавкасем—54 уçат, ал вĕççĕн тавар сутса çÿрессине 21 çĕрте организацилет.

Çĕнĕ кадрсем

Çĕрпÿ машинă-тракторлă станци çумĕнче организациленĕ трактăриссен курсĕнчен çак кунсенче 53 çын вĕренсе тухрĕç. Курс пĕтернĕ йулташсене колхозсене производствăлă практикăна йачĕç.

И. Федарăв.

Екскурсие кайаççĕ

Ишлей районĕнчи „Ударник" аластăлăх ертелĕ пĕрремĕш квартăлта чăпта çапас плана 128 процент пурнăçа кĕртрĕ. Малта пыракан тăвата стахановеца екскурсие йама палăртнă. Мочалова йулташ Мускава, Йегорăвă—Кийева, Йакăвлĕвпа Данилăв йулташсем Днепрогеса екскурсие кайаççĕ.

К. Сорокин.

Ответлă редактăр Н. СЕМЕНАВ.

ĔНЕ НĂРРИ—ВЫЉĂХА ПЫСĂК СИЙЕН КÿРЕТ

ПУРТЕ ĔНЕ НĂРРИПЕ КĔРЕШĔР!

Выљăхсене нăрă хурчĕсенсен таса тытас тĕлĕшпе ответлăх хурас:

а) совхозсенче—директăрсем çине;
б) колхозсенче колхоз председателĕсем çине;
в) уйрăм хуçалăхлă çектăрта—выљăх хуçисем çине.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленирен.

Нăрă хурчĕсем выљăх ÿтне кĕрсе ăна канăç памаççĕ, нăрăлă выљăх пĕр май хускалса—хыçкаланса тăрат, начарланат тата сĕт чакарат.

Нăрă хурчĕсем выљăх тирĕ айĕнче

Хурт выљăх тирне çисе шăтарнă. Ăна пĕтерес пулат.

Хурт вырттнă тĕлти мăкăљ тавра çăм касни

Нăрă хуртне пăчăртаса кăларни

Нăрă хурчĕсене алăпа пăчăртаса кăларасси

Тир айĕнчи хурта шĕвĕр йе пуçпÿрнепе пусса шăйăрса тир шăтăкĕ тĕлне илсе пымала. Унтан, йĕрипен пÿрнесене шăтăк тĕлнеле илсе пырса хытăрах лутăракаса пăчăртаса хурта çийеле кăлармала.

Çийеле кăларнă хурта пусса вĕлермеле, краççынлă йе формалинлă витрене пăрахмала.

Чĕрĕ хуртсене тислĕк çине йе çуп-çап ăшне (çĕр çине) нийепле те пăрахма йурамаст.

Нăрă хуртне выљăх тирĕнчен хуçи хăйех алăпа пăчăртаса кăларма пултарат. Емелпе сĕрме йе тир хушшине емел йарас пулсан ветеринари ĕçне пĕлекен çын кăтартса панипе çеç тумала.

Пур совхозсемпе колхозсен, ветеринари санитарĕсен, выљăхсене илсе çÿрекенсен, кĕтÿçĕсен, выљăх пăхакансен, ĕне сăвакансен, пур колхозниксен тата йединоличниксен выљăх нăррипе кĕрешмеле.

АСТĂВĂР:

Ĕне нăррине пĕтернипе епĕр хамăр çĕршыва нумай мĕлйунлă убыткăран хăтаратпăр, промышлĕннăçа валљи мĕлйуншар лайăх тир упраса хăваратпăр, халăх валљи вуншар пин тоннă аш-какай тата мĕлйуншар литр сĕт паратпăр.

Выљăха витере тăнă чух хуртран тасатни

Выљăха нăрă хурчĕсенчен тасататассине çуркунне вăхăтĕнче виçĕ хутран кайа мар туса иртермеле. Нăрă хурчĕсемпе кĕрешмели емелсем ветеринари амбулаторисенче тата ветеринари лечебницисенче йаланах пулма кирлĕ.

ТИР ХАТĔРЛЕКЕН СОЙУЗ.

КОГИЗ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ УЙРĂМĔ

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем

умĕн хăйĕн Канашри, Улатăрти, Çĕмĕрлери, Йетĕрнери, Куславккари, Патăрйелĕнчи, Сĕнтĕрвăрринчи тата Шупашкарти магазинĕсенче çак кĕнекесене сутлăх тытат:

Вырăсла:

1. СТАЛИН—Доклад о проекте Конституции СССР. Конституция (основной закон) СССР . . . Хакĕ 30 пус.
2. СТАЛИН—Речь на предвыборном собрании избирателей Сталинского избирательного округа города Москвы 11-го декабря 1937 года . . . Хакĕ 10 пус.
3. Сборник—Речи на собраниях избирателей в Верховный Совет СССР. Хакĕ 1 тенкĕ
4. Конституция РСФСР . . . Хакĕ 10 пус.
5. Положение о выборах в Верховный Совет РСФСР . . . Хакĕ 10 пус.
6. ВЫШИНСКИЙ—Положение о выборах в Верховный Совет СССР в вопросах и ответах . . . Хакĕ 25 пус.
7. Сборник—О Конституции Союза ССР . . . Хакĕ 65 пус.
8. КАЛИНИН—Что дала Советская власть трудящимся . Хакĕ 15 пус
9. ЖДАНОВ—Подготовка партийных организаций к выборам в Верховный Совет СССР по новой избирательной системе и соответствующая перестройка партийно-политической работы . . . Хакĕ 30 пус.
10. БУДЕННЫЙ—Боец-гражданин . . . Хакĕ 15 пус.
11. ШВЕРНИК—Профсоюзы к выборам в Верховный Совет СССР Хакĕ 10 пус.
12. О выборах в Верховный Совет СССР (постановление Пленума Чувашского Обкома ВКП(б) . . . Хакĕ 15 пус.
13. Наша родина . . . Хакĕ 85 пус.
14. СССР и страны капитализма . . . Хакĕ 80 пус.
15. Кого мы выберем в Верховный Совет СССР . . . Хакĕ 25 пус.
16. СТЕЦКИЙ—Сталинская Конституция—воплощение идей Ленина Хакĕ 20 пус.

Чăвашла:

1. СТАЛИН—ССР Союз Конституци пройекчĕ çинчен. ССР Союзĕн Конституцийĕ (Тĕп саккун) . . . Хакĕ 70 пус.
2. СТАЛИН—1937 çулхи декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче каланă сăмах . . . Хакĕ 10 пус.
3. РСФСР Конституцийĕ . . . Хакĕ 25 пус.
4. РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положени . . . Хакĕ 15 пус.
5. ЧАССР Конституцийĕ . . . Хакĕ 25 пус.
6. ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положени . . . Хакĕ 15 пус.
7. КАЛИНИН—ССР Союз Верховнăй Советне суйламали Положени çинчен . . . Хакĕ 10 пус.
8. ССР Союз Верховнăй Советне суйласси, ПСК(б)П Чăваш Обком пленумĕн постановленийĕ . . . Хакĕ 15 пус.
9. СТЕЦКИЙ—ССР Союзĕнче социализм çĕнтерни тата çĕнĕ Совет Конституцийĕ . . . Хакĕ 1 тен. 50 пус.

Çакăнта кăтартнă кĕнекесене илме васкăр!

Заказсене çак адрĕспа йарăр: Шупашкар хули, Хĕрлĕ плошчĕ, КОГИЗ магазинĕ „Книга—почтой".

КОГИЗ Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ.

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайалла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 199, Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. 25—94 см. 1—1 п. л.